*Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!*

# КАПКӐН

№ 2
феврал 1937 ҫ.

В. Филиппӑв худ. ӳкерчӗкӗ



*А. С. ПУШКИН — Сывӑ-и-ха, палламан ҫамрӑк йӑхӑм!*

# Вырӑссен аслӑ поечӗ А. Ҫ. Пушкин вилнӗренпе ҫӗр ҫул ҫитрӗ



Ҫук, вилмӗп еп йӑлтах—ман чун,
ман ӗмӗт йулӗ,
Вил ӳт ҫӗрсессӗн те, пиллӗ
кӗввӗмсенче—
Пӗртен-пӗр сӑвӑҫ йулмиччен
мухтавлӑ пулӑп
Еп ҫак ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинче.

---

## Вӑпӑр

Шиклӗ пулнӑ мӗскӗн Ваӈӑ,
Пӗрреччен вӑл каҫпала,
Чӗтресе кӑна васканӑ
Килнеле ҫӑвапала.

Мӗскӗн Ваӈӑ сывламасӑр
Таканса утаҭ аран,
Сиввӗн шӑм кӑшланӑ сасӑ
Илтӗнет ӑна вара.

Ваӈӑ тӑчӗ, пулчӗ шӑпӑрт,
Пӳлӗхҫӗм!—тет,—мӗн тӑвас?—
Ку—хӗрлӗ тутал̆ӑ вӑпӑр
Шӑмӑсем кӑшлаҭ пулас!

Пӗтрӗм епӗ! Вӑйӑм тайӑн,
Вупкӑнран мӗнле хӑпам,
Кӗллӗме каланӑ майӑн
Вил тӑпри илсе хыпам.

Мӗн-ха? Вӑпӑр выранне
(Чухлӑр, Ваӈӑ ҫиллине)
Тӗттӗм шӑтӑкра пӗр йытӑ
Шӑм татки кӑшланӑ хытӑ.

Н. Пиктемир куҫарнӗ

## ЕПИГРАМСЕМ

### Хурткӑпшанкӑсен пуххи

Йепле вӗтӗ вир-вир кукамайсем!*)
Булавкӑ пусӗнчен пӗчӗккисем те пур вӗсем.

Крылов.

Еп пухнӑ хурткӑпшанкӑсем
Усах тӑраҫҫӗ тусӑмсемшӗн,
Темли те пур тӗслӗхӗсем!
Мӗнчул еп тӑрӑшнӑ вӗсемшӗн!

Чӑнах та, сурчӗсем нумай.
Акӑ** вир-вир кукамай,
Акӑ** усал ерешмен,
Акӑ** ку Раҫҫей пӑванӗ,

Акӑ** хура хыт шӑна,
Ку тата** чи вӗтӗ лӗпӗш.
Ӑҫтан-ха тупӑннӑ ун чухлӗ!
Пурне те витӗр тирсе тухнӑ,

Вӗсем тирпейлӗн рамсенчен
Курнаҫҫӗ епиграмсенче.

Пиктемир куҫарнӗ.

### Гр. М. С. Воронцова

Ҫурма-милорд, ҫурма-купса,
Ҫурма аслӑ, ҫурма-айванчӑк,
Ҫурма-йытӑ, анчах пур шанчӑк
Кайран йӑлт йытӑ пуласса.

### Шалӑп

Аслаҫӑр ҫӗвӗҫ, повӑр пиччӗр,
А есӗр капӑр господин—
Ҫапла пуплеҫ, ан тӗлӗнсемӗр—
Есир ҫеҫ мар-ҫке ун пек ҫын.

Маншӑн, ырҫын йӑхшӗн, ак халӗ,
Айух, пӗр хурӑнташ та ман—
Фраксем те ҫӗлемест ахалӗн,
Апат та пӗҫерсе памасҭ.

---

*) Вир-вир кукамай, урӑхла—уйӑр, вырӑсла коровка.

## Пурнаť, пурнаť курилкă!

—Пурнатим-ха курилкă журналис?—
„Пурнаť-ха, чĕпчĕрех! çаплах хăй типĕ,
Çаплах кичем, айван, кĕвĕç те хытă,
Йалт тултараť—лист хыççăн пуťсĕр лист:
Кивкирĕке те, кирĕклĕ çĕнлĕхе те".
—Фу! йăлăхтарчĕ журналис курилкă!
Йепле шăршлă хăййа ман сÿнтерес?
Йепле çав ман курилка пĕтерес?
Парсам канаш.—„...Сур ун çиве пĕрре".

## Аракчейĕва

Пур Раççейе хĕсĕрлевçĕ,
Кĕпĕрнаттăрсен хĕртевçĕ,
Совета та вĕрентевçĕ,
А патшашăн—тус, тăван.

Ťулли çилĕ, вĕчĕх, ăссăр,
Сисĕмсĕр те тÿрĕ чунсăр—
Кам ха çав „йăпăлтатусăр
Пăхăнан?"—фрунтри салтак.

## Çарпуçĕн бÿстне

Кăлăх унта йăнăш куратăн:
Ăсталăхăн чечен алли
Çак мрамăр тутана култарнă;
Сив çамкинче— хайар палли.
Ахалĕн мар сăн ик чĕлхелĕ.
Çапла пулса та çак мăн çын:
Пулма вăл хăнăхса ик питлĕ,
Пурнăçĕпе вăл—арлекин.

П. Хусанкай куçарнă.

# „БОРИС ГОДУНОВ"

### ДРАМĂ СЫПĂКĔ

### *ХĔРУЙĔ. ХĔРУЙ МĂНАСТИРĔ*

### Х а л ă х.

**П ĕ р и.**

Вĕсем пурте хаљ аппăш патĕнче;
Патриархпа тата бойарсемпе
Борис унта хаљ тин çех кĕрсе кайрĕ.

**Т е п р и.**

Мĕн илтĕнет?

**В и ç ç ĕ м ĕ ш**

Çаплах турткаланаť-ха,
Анчах çапах та шанчăк çухалман.

**Х ĕ р а р ă м** (*ачине*).

Ан макăр, теп! Мукка килет! Мукка!
Асту! асту! Мукка тытаť, ан макăр!

**П ĕ р и.**

Картишнеле иртме пулмасť-ши, е?

**Т е п р и.**

Ăçта унта! Уйра та лăпă пек.
Мĕнпур Мускав капланнă пулаť те.
Пăх-халĕ ав—çивиттисем çинче,
Чансем панче, чиркÿ тăррисенче,
Еккей тата—хĕрес урлисенче те—
Мĕн чухлĕ çын!

**П ĕ р р е м ĕ ш**

Пулаť те мыскара!

**П ĕ р и.**

Мĕскер йăслаť унта?

**Т е п р и.**

Шăпланăр-ха!

Мĕскер шавлаť? Е, халăх улаť-çке·
Хум çапнă пек кайа-кайа укеççĕ,
Йĕркепĕрĕн... Ак çитрĕ... Ну, тăван,
Черет пирте—часрах чĕркуçленер!

**Х а л ă х** (*чĕркуççи çинче. Улу та йĕрÿ*).

Хĕрхен, атте! Ыр кăмăлна тупсам!
Пул пирĕншĕн патша, пул аслă пуçлăх!

**П ĕ р и** (*шăппăн*).

Мĕскершĕн-ха йĕреççĕ?

**Т е п р и.**

Пĕлмеккей!
Ĕç пирĕн мар, тек пĕлччĕр бойарсем.

**Х ĕ р а р ă м** (*ачине*).

И, ăнманскер! Йĕрес чухне йĕмест;
Йĕр, мурилеш! Ак еп сана! Мукка килет!
Йĕр, йĕр часрах!
(*Ачине çĕре перет, леш çухăраť*).
Çав кирлĕ пaçăрах.

**П ĕ р и.**

Йĕреççĕ çех, тен епĕр те пуçлар-и?

**Т е п р и**

Тем пек, шăллăм, йĕресчĕ, çук, тухмасť.

**П ĕ р р е м ĕ ш.**

Манăн та çав. Сухан мĕн çук-и сан—
Куçа сĕрме?

**И к к ĕ м ĕ ш**

Çук, тен сурчăкпала
Йĕпетĕпĕр. Мĕскер тата унта?

**П ĕ р р е м ĕ ш**

Кам мур пĕлсе çитертĕр-и кунта!

**Х а л ă х.**

Вăл килĕшрĕ! Пуçкăшăлĕ унра!
Борис патша! Борис, ей, сывă пултăр!

Митта Ваçлейĕ куçарнă.

# ЁНЕНМЕРĔÇ

— Пурнăçра сахал мар тĕлĕнмеле ĕçсем пулаççĕ, — терĕ пĕри хăрах аллипе — ларакан чей стаканĕнчен тытса, тепĕр аллипе — кăлбасси тирĕпе выљаса. — Пĕре манăн хĕрĕх çулхи кĕлеткеме йатса Атăл леш йенчи хăма çуракан савăтран таврăнмала пулчĕ. Тĕттĕм. Хам ăçтипе вăрман ăçтине те уйăрма çук. Ура айĕнче йур кăчăртатать, пуçра унччен пыр шăтăкĕ витĕр йăнклаттарнă ерех шавлать. Пынă хушăра сасартăк мана такам кавлесе йарасшăннине сисрĕм. Манăн чĕлĕм шăрши çапнă аша кам активсе пăхасшăн-ши, тесе шăрпăк çутса пăхрăм, — хам умра хайар тигр „краковйак" ташласа тăнине курах кайрăм. Икĕ куçĕ — икĕ шĕлкăвар. Карнă çăварне патефон йе байан кĕрсе каймала. Епĕ унăн хырăмне кĕрсе выртассинчен хăтăлас тесе, ăна, алла чĕре патне тыттсах, тархаслама тытăнтăм.

— Ан тив-ха мана. Килте манăн арăм та пур, ачамсем те пур. Есĕ мана тытса çисен, вĕсем макăрма пултараççĕ, — терĕм.

Тигр хăнк та тумарĕ. Ман пата тата пĕр пусăм йарса пусрĕ.

— Тархасшăн ан тив мана. Çитăр Йăванча вăтăр сакăр тенкĕ укçа памали пурччĕ. Санăн хырăмна парăма тÿлемесĕрех кĕрсессĕн, вăл ман çине çиленме пултарать, — терĕм.

— Çапла чăнахах каларăн-и? — терĕ итлесе ларакансенчен пĕри — тăпăл-тăпăл кĕлеткелĕ хура çын. — Мана тÿлес парăм çинчен ун пек хăрушă вăхăтра та аса илтĕн пулать, ай-ай! Апла пулсан есĕ аван...

— Аса илтĕм çав. Сана вăл парăма ыранах тÿлесе татăп-ха. Тигр ман сăмаха итлес-тăвас темерĕ. Хирĕç шăлĕсене йĕрсе кулнă пек турĕ.

Кулнă пек тунăшăн епĕ тигр çине питĕ çилентĕм. Пуçĕнчен çапас терĕм те, анчах кĕсйере штопăрсăр пуçне нимĕн те çуккине аса илсе, вăл шухăша пăрахрăм. Тигр та ман çине пăхать, епĕ те ун çине пăхатăп. Пăхса тăнинчен усă пулас çуккине сисрĕ пулмала, çăварне пасăрхинчен тата сарлакарах карса, мана хам сисмен çĕртенех, хыпса илчĕ те, епĕ унăн пыр шăтăкĕ витĕр хырăмне кайрăм.

— Пĕтрĕм ĕнтĕ! Çитес ернере арăма лартса хуњкассине хăнана кайса килесси пулмарĕ, тетĕп.

Çапла шухăшласа ларнă вăхăтра тигр йĕкленме тытăннине сисетĕп. Йĕкленсен-йĕкленсен мана хăй хырăмĕнчен хăсрĕ пăрахрĕ. Тигр хырăмĕнчен ним аманмасăр тухнăшăн калама çук савăнтăм. Савăннипе тигăра тав тăвас тесе, сылтăм алăма ун патнеле тăсрăм. Тигр алăма тытмарĕ. Сирĕн шухăшпа мана тигр мĕншĕн хăсса пăрахнă?

— Мĕншĕн? — тесе ыйтрĕç итлесе ларакансем харăссăн.

— Епĕ сире хам хĕрĕнкĕрех пулни çинчен малтанах каларăмçке-ха. Манран ерех шăрши кĕнине йуратман. Ку çынна усал çĕпререн тунă пулмала тесе, мана хăсса пăрахнă.

— Пулма пултарать, — терĕç йулташĕсем.

— Манпа та çавăн пек тĕлĕнмеле ĕç пулчĕ! — терĕ итлесе ларакансенчен пĕри, шухăлтерех тумланнă, кĕске уссилĕ, ватă мар сăнлă, чĕрĕ куçлă етем. — Колхоз ачисем валљи йолкă тумала. Мана колхоз кулътработникĕ чăрăш касса килме хушрĕ. Ачасене йуратнăран вăл ыйтнине туса парассинчен пăрăнса тăмарăм. Тумлантăм та тухса утрăм. Хамăр колхоз арманĕ тĕлне çитсен, ăшă пÿрте кĕрсе, чĕлĕм пехлес килсе кайрĕ. Арман пÿртне кĕтĕм. Ой-ой, туртса тултарнă! Урайĕнчен пуçласа маччана çитиччĕнех тĕтĕм йавăнать. Çыннисем курăнмаççĕ, сассисем çеç илтĕнеççĕ. Пĕр çынни хуларан таврăннă чухне çилтăманра çухалса кайса аран-аран çул тупни çинчен халап çапса ларать. Пÿрт тулли тулнă чĕлĕм тĕтĕмĕнчен хамăн пуртта çакса йатăм та, епĕ те чĕлĕм кăларса итлеме лартăм.

— Пуртта чĕлĕм тĕтĕмĕнчен çакрăм тетĕн?

— Чĕлĕм тĕтĕмĕнчен çакрăм çав. Пуртă ÿкмерĕ. Тупата суймастăп.

— Мĕн тĕлĕнмели пур, — терĕ тепри. — Пулма пултарать. — Иртнĕ çулта манпа та пĕр тĕлĕнсе хытсах каймали ĕç пулса иртрĕ. Пĕрре епĕ иртнĕ йанвар уйăхĕн малтанхи кунĕсенче йĕлтĕрпе вăрмана кайрам. „Вăрман урлă касрăмăр" тесе йурлакаласа пынă хушăра, сасартăк лĕмсĕркке упа тĕлне пултăм. Çанталăкĕ сивĕ. Йăвăçсем шарт та шарт çурăлаççĕ. Мĕн тăвас? Ку упана мĕнле те пулсан тытасах пулать, тетĕп. Есĕр хут вĕреннĕ çынсем пĕлетĕр ĕнтĕ — сивĕпе йапаласем пăчăртанса лараççĕ. Пăхатăп: манăн пăшал, çанталăк ытла сивĕ пирки, пăчăртаннă çемĕн пăчăртанса револљвĕр пысăкăш çеç тăрса йулчĕ, икĕ кĕпçелĕ пулнăскер пĕр кĕпçелĕ пăшал пулса йулчĕ. Мĕн тăвас? Нимĕн тума та çук. Анчах ман телейе, упа та сивĕ пирки пăчăртанса пĕчĕкленнĕ çемĕн пĕчĕкленме тытăннине куртăм. Кирлĕ таранах пĕчĕкленсе çитсен, епĕ ăна çăмăлăнах алла илтĕм те, хамăн ăшă кĕрĕк кăсйине персе чикрĕм. Кайсан-кайсан кĕрĕк кăсйинче ăшă пирки упа саралнă çемĕн сарăлма тытăннипе, кĕсйере вырнаçми пулчĕ. Кăштах тăхтасан, ăшă пирки тата нумайрах сарăлса, кăсйене çурчĕ йачĕ. Мĕн тăвас тетĕн. Манран тарчĕ. Упа тытса килесси пулмарĕ.

— Пулма пултарать, — терĕç итлесе ларакансем

— Епĕ халĕ пыракан феврал уйăхĕнче пулса иртнĕ пĕр тĕлĕнмеле ĕç çинчен ним суймасăр каласа парам-ха сире, — терĕ тепĕр хăни тигр хăсни, чĕлĕм тĕтĕмĕ тата упа тытни çинчен каласа панă йулташĕсем çине ăмсанса пăхса. — Февралĕн 10-мĕш кунĕнче, пăртакçă çанталăк капăртарах пек туйăнчĕ те, Турикаса лапăстаттартăм. Турикассен библиотекă пысăк. Белински кĕнекине киле илсе килсе тепĕр хут вуласа тухас, терĕм. Пыратăп урампа. Мана хирĕç пĕр йĕкĕт, çăварне пирус хыпнă пырать. Ăна йулташĕ тĕл пулчĕ те:

— Кĕçĕр клубра Пушкин касĕ пулмала. Курма пыратни? — терĕ.

— Пушкин?! Мĕнлескер вăл? Епĕ халиччен илтмен-çке! — терĕ йĕкĕт.

— Ой-ой-ой! Пушкин çинчен пĕлместĕн-и?

— Илтмен те, ăçтан пĕлес! — терĕ йĕкĕт именсе.

— Кăна есĕ суйрăн! — тесе малала калама памарĕç итлесе ларакан йулташĕсем çакăн çинчен калакана. — Кусене суйса кăтартам-ха, терĕн пулĕ те, анчах суйма вĕренме санăн нумай çăкăр çимеле-ха...

— Ха! Пушкин ҫинчен пĕлмен ҫамрăк ҫынна куртăм, тесе тыттарма хăтланаť, сана ĕненме кунта ухмах ҫук-ха, — терĕ килхуҫи те хайхи ҫынна.

— Ай-ай ай! Мĕнле вăл, а? Пушкина пĕлмен ҫынна ниҫти ҫамрăксем хушшинче те никам та тупас ҫук.

Ҫын хирĕҫ нимĕн калама пĕлменнипе ĕнси хыҫне тĕреклĕ пӳрнисемпе кăтăрт-кăтăрт хыҫса илчĕ те: — Мĕнле-ха, ыттисене ĕненчĕҫ, манăнне — ĕненмерĕҫ, — тесе ҫĕлĕкне шырама тытăнчĕ.

Ун хыҫҫăн, чей ĕҫме пухăннă ытти йулташĕсем те килхуҫине ал парса, тухса кайрĕҫ.

Унччен чип-чипер пынă калаҫу Пушкина пĕлмен ҫынна курни суйа сăмах туйăннăшăнах сӳнсе пĕтрĕ.

Иван Мучи.

## Йурăхсăр прикашчик

— „Капкăн“ кăмăлне кайма нийепле те май ҫук. Пĕлтĕр ман ҫинчен „тавар илекенсемпе йытăла калаҫаť“ тесе ҫырчĕҫ, кăҫал „тавар илекенсем умĕнче хăйне улпутла тытаť“ тесе ҫырнă, тĕлĕнмеле!

П.

# Йатне кăна тăвакан коңух




— Есĕ ма ку лашан пуҫне ҫеҫ тасатнă?
— Мĕншĕн тесен пирĕн председатĕл лашасем патĕнчен иртсе ҫеҫ кайаť те лашасен пуҫĕсене ҫеҫ кураť.




## Задачӑ

Икӗ вырӑнлӑ хисеп (двухзначное число) ҫырӑр та ун ҫумне ҫав хисепех ҫырса тӑватӑ вырӑнлӑ хисеп тӑвӑр. Ҫак тӑватӑ вырӑнлӑ хисепе малтан ҫырнӑ икӗ вырӑнлӑ хисеп ҫине пайлӑр та, пулнинчен хӗрӗх кӑларса пӑрахӑр. Вара Имелевӑ йалти (Шӑхасан районӗ) Тихӑн Петров миҫе ҫула ҫитнине кӑтартакан хисеп пулаҭ.

Ҫак хисепрен пӗрре кӑларса тӑватта пайласа пулнинчен пиллӗк кӑларса пӑрахсан, Тихӑн Петров пӗлтӗрхи ҫул вӑтанма пӗлмесӗр миҫе хут авланнине кӑтартакан хисеп пулаҭ, тесе пӗлтерчӗҫ пире. Ку хисеп пире ытла нумай туйӑнчӗ те, епӗр вӑл йалти советран Тихӑн Петров ҫулталӑк иртиччен миҫе хут авланнине ыйтрӑмӑр. Вара пире: есӗр тунӑ хисеп тӗрӗс мар, вӑл сирӗн хисепрен пӗрре сахалрах авланнӑ, тесе пӗлтерчӗҫ.

Вӑтанма пӗлмен Тихӑн Петров 1936-мӗш ҫулта миҫе хут авланнине пӗлмеле.

Шурсухал.

## Хурламала мар

Пӗр йалсовет председателӗнчен ыйтнӑ:

— Иван Терентйӗвич, есӗ ҫураки кампани ваҙҙи мӗн-мӗн тума шухӑшлатӑн?—тенӗ.

Лешӗ каланӑ:

— Шухӑшламан. Мӗншӗн тесен шухӑшлассине маншӑн хамран аслӑраххисем шухӑшлаҫҫӗ, тӑвассине—кӗҫӗнреххисем тӑваҫҫӗ, тенӗ.

Кӗлкешри (Вӑрмар р.) „Комбайн“ колхоз председателӗ те ҫавӑн пекех аслӑраххисем шухӑшласса, кӗҫӗнреххисем тӑвасса ӗмӗтленсе пурӑнаҭ. Ҫавӑнпа вӑл колхоз ҫуракине пит йапӑх хатӗрленет (куҙтиватӑрсем, плугсем йур айӗнчех лараҫҫӗ; 5-мӗш бригадӑ торф кӑларман, т. ыт. те).

Шухӑшлассине—аслӑраххисем шухӑшласса, тӑвассине—кӗҫӗнреххисем тӑвасса кӗтекен председатӗл ҫийессе ыттисем ҫисе парасса кӗтмест. Ҫавӑнпа та йӗплӗ ҫӑмаха та хӑйех ҫирӗ. Ӗҫкунӗсене те хӑйне тивӗҫлисене хӑйех ҫийет. Ҫийесӗҫес йенчен ӑна хурлама ҫук.

## Тамаша

Пушнарти (Йетӗрне р.) Мичурин йачӗпе тӑракан колхоз завхозӗн—И. Алексҫейӗвӑн чип-чипер хӗсӗнсе тӑракан, лӑпкӑ кӳлӗ йевӗр йӑваш куҫӗсем сасартӑк пысӑк алтӑр ҫӑварӗ йевӗр чарӑлса кайнӑ. Халиччен куҫхаршийӗсем айне пытанса пурӑнакан куҫ шӑрҫисем харпӑрхӑй вырӑнне шӑнӑҫаймасӑр чалт сиксе тухса ҫамкасем ҫине уха-уха ларнӑ. Мӗн пулнӑ?

Ҫын курман арпа ӳплине хунӑ 10 лав купӑста ҫавӑнтах шӑнса кайнӑ! — Ак тамаша!

— Тамаши тамаша та, анчах Алексҫейӗв комсомолӗс ҫавӑн хыҫҫӑн ҫийӗнчех лӑпланнӑ, тет, Иванов ачине пуппа кумма туса йат хунӑ ҫӗре кайнӑ, тет. Унтан таврӑннӑ чухне хӑрах ури „Капкӑна“ хӗсӗннӗ, тет те, ыратакан пулнӑ, тет, анчах ура хуҫи Алексҫейӗв ҫынсем умӗнче уксахлама вӑтанаҭ, ыратнине никама систермест, тет.

## Чей ӗҫмест

Салтыков-Шчедрин писателӗн кӗпӗрнатӑрӗ ӗлӗк:

— Шампански ерех ӗҫме май пур чухне ма шыв ӗҫес,—тенӗ.

Турхан районӗнчи Буденный йачӗпе тӑракан колхоз председателӗн Иванов Иванӑн шампански ерех ҫук та, ҫапах вӑл чей йе вӗретнӗ шыв ӗҫмест, ерех ҫеҫ ӗҫет.

Ҫуракине йапӑх хатӗрленет. Ҫураки плугисене ҫӑмӑр шывӗпе „ҫутатнӑ“. Лашасем ырханкка, вӑйсӑр. Навус тӑкман. Йур тытман...

Иванов ӗҫке пирки пӗрре хӑрах пӳрнесӗр йулнӑ, тепре ҫӗлӗк ҫухатса пуҫа тӑхӑнмалисӗр йулнӑ. Халӗ пасартан ҫӗлӗк илнӗ, ҫӗлӗкне тӑхӑнмали пуҫӗсӗр йуласран хӑрамала.

## Сӑнанайман чӗлхе

Совет территорийӗнчи вӗренсе сӑнаса пӗтерейм чӗлхесен хисепне хӑшпӗр ҫтена хаҫачӗсен чӗлхисене кӗртме пулаҭ.

Акӑ Ҫӗрпӳ районӗнчи Тавӑшкасси йалсовечӗ ҫумӗнче тухса тӑракан „Ударлӑ ӗҫлер“ ҫтена хаҫатӑн 13-мӗш номӗрӗнчи „Срываҭ тӑваҭ“ тесе йат панӑ заметкӑн темиҫе йӗркине илсе кӑтартатпӑр:

„Выездная президиум Цив. района йышӑннӑ постановлени тӑрӑххӑн. 5 декабӗрте техкультур и хлебо—закуп выполнит тӑвас ыйтупа. 6-мӗш—XII президиум правление колхоз „Коминтерн“ тума асӑннӑ плана выполнит тӑвас тесе ҫав кунах каҫхине-общий собрани туса членӗсене пӗлтерес тенӗ вӑхӑтра пред. правлени Егорӑв В. чирлерӗм тесе кабинетра йӑнӑшса выртаҭ ҫав кунах Егоров В. веденскине ӗҫме пӑрлӑ ҫул пулсан та лашапа как машинпа кайанах“...

Кун пек чӗлхепе ҫырнӑ заметка музӑк ҫине куҫарса йурласа парсан... ех, мӗнле паникӑ пулӗччӗ!

# Шăпчăкпа куккук

Вăрмансенче, сĕм каçсенче,
Ыр çурăн чаплă йурăçи
Тĕрлеттерет, шăхрать, кĕрлет.
Анчах тăрлавсăр пĕр куккук,
Хăйне çеç мухтакан каппайчăк,

Пĕр куккуне кăна тăсать.
Çавнах тăсать ун хыççăн сас та.
Шав куккукларĕç, йăлăхтарчĕç.
Хăть тар халех ес. Тур, хăтарччĕ
Елегилĕ куккуксенчен!

А. Ç. ПУШКИН.

# Шăпчăк çинчен тавлашни

„Кама каланă пулĕ Пушкин,
Çуркуннехи шăпчăк, тесе?"—
Тавлашнă икĕ сăвăç, уншăн
Пĕрне пĕри кÿрентерсе.

Пĕри калать: мана каланă,
Ман сăвăсем йепле хĕрÿлĕ,
Кăварлă,
Хĕмлĕ те

Мухтавлă,
Паттарлă,
Çĕнтерÿлĕ...
Хĕрÿлĕн, кăварлăн еп йурлатăп...

Кăварлă хĕлхемпе, хĕрÿ çулăмпа та
Çунатăп хĕмленсе, çу-лăм-лан-са...
—Стой!
Сана мар,—тесе теприйĕ
Пуçларĕ уççăн тавлашма:
„Сан сăввусем—сăмах купиййĕ,
Ес пĕр стройа та кăтартман,
Вăт, еп зато мĕн пур стройа та
Кăтартнă, курăр ак пурте:

Волховстрой!
Кузнецстрой!
Днепрострой!..
Стой! Ангарстрой та пур,
Пулас Атăл стройĕ те!
Шăпчăк тесе мана каланă,
Вăл ман сасса илтсе мухтанă.

---

Вĕсем тавлашнă, вăрçнă та... Анчах пĕри те,
Пушкин ырланă шăпчăк-сăвăç мар.
Вĕсем пирки çапла каланă Пушкин:
Турă, пире ун пек куккуксенчен хăтар.

М. Михайлăв.

# Икĕ куккук




— Критик, хăтарччĕ кун пек елегилĕ куккуксенчен!

---

## Ватерпас

Вăтакас Татмăшри (Канаш районĕ) кĕçĕн вăтам шкулта вĕренекен ачаран ыйтрăмăр:

— Мĕн вăл „ватерпас"?

— „Ватерпас" тесе пирĕн вĕрентекен Ивановăн урока начар хатĕрленсе пынă ачасен йанах шăммисене виçмели хатĕрне калаççĕ,—терĕ.

## Çÿлти вырăна

— Сирĕн Вăтакас Татмăшри Порфирийĕв пиçмоноçĕц хаçат-журнал сарас ĕçе çÿлти вырăна хурать-и?

— Хурать. Кашни кунах подписчиксене памасăр хăварнă хаçат-журналсене çÿлти сентре çине хурать.

Ваç. Çмирнов.

# О, мăнтарăн Çĕрпӳвĕ!

...Соцкультурă çуртĕнче туп-тулли халăх. Сцена çинче президиум. Трибуна çинче район представителĕ доклад тунă.

Оратăр хăйĕн докладне каласа пĕтернĕ. Унтан-кунтан пăч-пач ыйтусем паркаланă...

—Кам тухса калас тет?—тенĕ пуху председателĕ. Никам та алă çĕклемен. Йăпăлтатса та пăхнă вара председателĕ, çилленсе те кăтартнă, анчах çапах тухса калакансем тупăнман. Вара пуху председателĕ хăй калама тытăннă. Илемлĕ те вирлĕ каланă вăл. Малтанах тĕрлĕ организацисен пуçлăхĕсене отчотлă пухăва начар хатĕрленнĕ тесе палăртса хăварнă, унтан майĕпе ытти ыйтусем çине куçнă. Уйрăмăнах культура ыйтăвĕ çинче нумай чарăнса тăнă. Çĕрпӳ хулин пĕртен-пĕр культурлă çуртне чăн-чăн культурлă сăн кӳртмели çинчен, унăн сцени çинче тĕрлĕ-тĕрлĕ концертсем, спектакăльсем, ăслăлăх йенĕпе докладсем тумали çинчен, кино мĕн пуçланиччен кĕтмели пӳлĕмре, фойере, буфет, тĕрлĕрен хаçат-журналсем пулма кирли çинчен, афиша-лозунгсене пĕр йăнăшсăр çырмали çинчен нумай каланă вăл.

— Ну, кун хыççăн улшăну пулатех,—тесе шухăшласа илнĕ залăра ларакансем.

Чăн та, улшăнусем пулнă, анчах... кутăнла май. Тахăш ир, тахăш каç, фойе мар, буфет мар, халччен пулкаланă хаçат-журналсене те пĕтерсе хунă. Йăнăш çыракансене тӳсме пултарайман Павлăв йулташ (райĕçтăвком председателĕн заместителĕ) хулана тӳсмеле мар йăнăш çырнă пĕлтерӳ салатать. Унăн çеç чĕре, çынсен мунча чулĕ, тет пуль вăл. Ӳркенмесĕрех вуласа тухăр-ха хăш-пĕр вырăнсене. Акă иккĕмĕш параграф:

„Явке подлежат военнообязанные рождения с 1914 по 1896 года включительно проживающие в городе Цивильске и дер. три избы место явки горсовет".

6-мĕш параграфра:

„Лица уклонившийся от явки, руководителям учереждений, предприйатий и домовладельцы за не выполнение настоящего об'явления будут привлечены к ответственности... подвергнуть штрафу до 50 руб.

Зам. председатель раисполкома Павлов" тата икĕ çын алă пуснă.

Ир пулнă та каç пулнă—вăхăт кайнă. Соцкультурă çуртĕнче каллех пуху, каллех доклад, каллех тухса калани. Ку черетре прокурор хăй каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче революцилĕ саккунлăха пăсакансемпе, бӳрократисăмпа хытă кĕрешмели çинчен, тата çавнашкал ытти кирлĕ ĕçсем çинчен нумай, хĕрӳлĕ каланă.

— Ну, кун хыççăн улшăну пулатех,—тесе шухăшласа илнĕ залăра ларакансем.

Чăн та, улшăнусем пулнă, анчах... Растратчиксен шучĕ пушшех ӳссе пынă. Пожарнăй ушкăнĕн начальникĕ 4 пин тенкĕ растратă тăвать, ăна суд тăваççĕ, унччен те пулмасть хула совечĕн бухгалтĕрĕ 3 пин тенке йахăн ĕçсе йарать, ăна каллех суд тăваççĕ. Çав вăхăтрах лавка прикашчикĕсем пĕринчен-пĕринпе тупăшмала, пĕри 18 пин, тепри 23 пин, виççĕмĕшĕ 40, 50, 75 пин çаратаççĕ, пекарнĕре çаратаççĕ, столовăйĕнче, парикмахĕрскинче те çаратаççĕ.

Жуликсем те мах парса пурăнман. Пуринчен ытла суту-илӳ организацийĕсенче ишĕхсе пурăннă вĕсем. Ах, ытла та чейеçке Çĕрпӳри хăш-хăш „коммерсантсем"! Кунта пĕтĕм ĕç майне пĕлни çинче. Майне пĕлмесен, вĕсен йĕркисене ӳкмесен, есĕ выçă вилме те пултаран, нихăçан пĕр литăр краçин, пĕр метăр пусма, пĕр мăшăр калуш илсе кураймастăн. Вĕсен сана чике тăршшĕ лартса хăварма çĕр тĕрлĕ меслет пур. Пĕр магазинĕ кайри алăкпа таварне киле ăсатать (Ивановски кооперативĕ), тепри ирхине, 6 сехетре, есĕ тăрса ĕлкĕриччен „сутса" пĕтерет (Раймаг), виççĕмĕшĕ—хăйĕн тусĕсене лупас хыçне чĕнсе тухса унта майлать (краçин сутакан Гурйĕв), тăваттăмĕшĕ—хулана та илсе çитермест, Канашран тийесе килнĕ чухнех çул çинчех сутса пĕтерет (çăнăхсемпе сутă тăвакан Гурйĕв). Кун пек вăл, нумайах пулмасть, Кĕлешкасси çыннисене сутнă. Мĕн тăвас тетĕн, çапла кунти хăшпĕр çынсен кăмăлĕ. Çĕрпӳре чылай йапала хăйне май тӳнтерле. Електростанци, сăмахран, сахал чух йĕркелĕ ĕçлет: 10 сехет çитсен, çывăрма выртас умĕн, тин çутă парать. Столовăйсенче малтан иккĕмĕшне, унтан пĕрремĕшне параççĕ. Çăкăр сутакан лавкана алăкран кӳртеççĕ, кантăкран кăлараççĕ. О, мăнтарăн Çĕрпӳвĕ!

**В. Çаваç.**

# ЙУРАТУ

Йурату тенĕ йапала тĕрлĕ çыннăн тĕрлĕ тĕслĕ пулма пултарать.

Акă Шăхасан районĕнчи „Акатуй" йатлă колхоз иртнĕ çулхи çурккуне хăйĕн счетоводне авлантарчĕ. Арăмне питĕ йуратать счетовод. Йуратнипе пĕр ĕçе те кăлармасть ăна вăл. Йаланах хăй куç умĕнче тăратать. Канцеларинче унăн арăмĕ кунĕ-кунĕпе паниски çыхса ларать. Ку счетовод арăмне кăна мар, культурăна та çав тери йуратать. Ăна йуратса вăл канцеларин тĕпелти çтени урлăшĕпех „Саçитăчнăй тата культурнăй пурăнассишĕн кĕрешер" тенĕ сăмахсемлĕ лозунгне хăй аллипе хăйех çырса хунă. Культурăна кăна мар, тата таса мар канцеларинче ĕçлесе ларма йуратать çакă счетовод. Мĕн-мĕн çук-ши вăл канцеларин урайĕнче, саккисем çинче: сурчăкĕ те, пылчăкĕ те, тислĕкĕ те, тăпри те — пурте пур. Çтена çумĕнче вара асăннă лозунгпа урăм-сурăм ерешмен картисемсĕр пусне нимĕнех те çук.

Акă тата тепĕр тĕслĕ йурату. Пайкилтри (каллех Шăхасан р.) Иваньук Микули ĕçе йуратакан пĕр хĕре качча илме шухăш тытнă. Анчах ĕçе йуратакан хĕр ĕçекене йуратман. „Качча пымастăп",—тенĕ. Вара Микула, йуратнипе тарăхса ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ те, çак хĕре çĕçĕпе чикме тăнă. Ку ĕç иртнĕ уйăхра мар, ĕлĕкхинчех районри прокурор аллине кайнă. Прокурорĕ тата ĕçе сĕтĕрĕнсе тума йуратнипе — ку ĕçе халĕ те татса параймасть.

Çапла вăл йурату — тĕрлĕ çынăн тĕрлĕ тĕслĕ пулма пултарать.

**П. Ламанас.**




## Ахаљ мар

Карач йалӗнчи (Куславкка районӗ) Прамнек йачӗпе тӑракан колхозри завхозран ыйтрӑмӑр:

— Николайӗв йулташ! Есӗ колхоз пурлӑхне йапӑхтарма пуҫланӑ, кашни кун ӗҫсе ӳсӗрӗлсе тайкаланса ҫеҫ ҫӳретӗн. Кунӗ-кунӗпе ним ӗҫ тумасӑр ахалех вӑхӑт ирттеретӗн.

— Кам каларӗ сана „ахаљ“ тесе. Пӗртте ахаљ мар, ӗҫкунӗ тӳлеҫҫӗ,—терӗ.

## Ҫӳрени

— Сирӗн Мартынкассинчи Ҫергейӗв Петрпа Димитрийӗв Петр комсомолӗсем политкружока ҫӳреҫҫӗ-и?

— Политкружока ҫӳренине курман, Курган Микулайӗ патне очкола выљама ҫӳренине курнӑ.

## Ун пеккисем пур

— Библиотекӑр йулташ! Словар пар-ха! „Ритм“ сӑмах мӗнне пӗлмеле.

— Сана вӑл сӑмах ма кирлӗ?

— Епӗ поет пулас ҫын. Редакцирен темиҫе хут та: сӑввунта „ритм ҫук“ тесе пӗлтерчӗҫ. „Ритм“ тени епӗ хам сӑвӑсемпе ватӑрах поетсенчен иртсе кайса вӗсене путарса хунине пӗлтермест-ши?

## Камӑн хушмала

Ҫӗпрел районӗнчи (Тутар республикӗ) Хурӑнвар йалповӗн ӗҫӗсем ҫинчен ревизи комиҫҫи доклачӗпе прикашчик отчотне итленӗ хыҫҫӑн ҫакӑн манерлӗ калаҫу пулмала:

— Председатӗл йулташ, Упи лавкинчи прикашчик Шаталин отчочӗ ҫумне мӗн хушма пултаратӑн?

— Вӑл пӗр уйӑх хушшинче 270 тенкӗ растратӑ тунӑ та, манӑн хушмала-и? Вӑл хуштӑр. Ҫыншӑн мана хуштарма (тӳлеттерме) пултараймастӑр.

## Тухтӑр патӗнче

**Тухтӑр:**—Есӗ пирус хытӑ туртатӑн пулмала, сан чӗре йӑлтах хавшаса кайнӑ.

**Чирлӗ ҫын:**—Ҫук, уншӑн пулас ҫук. Пирус туртма пӑрахса чӗлӗм туртма пуҫлани ҫулталӑк ытла ӗнтӗ.

## Хут сахал пӗлекенсем калаҫни

— Епӗ хамӑрӑн Мартынкассинчи хутла сахал пӗлекенсене вӗрентекен Митрофанӑва курайми пултӑм.

— Ма курайми пултӑн. Ҫилентерчӗ-и мӗн?

— Ҫиленнӗшӗн мар. Шкула ҫӳремест те, курма май ҫук.

## Хухнӑ

Тутаркас районӗнче мунчасем халӗ те ҫителӗксӗр.

— Тасалӑх. тасалӑх, теҫҫӗ. Вӑл тасалӑх пирки епӗ хухса ларнӑ.

— Мӗнле апла?

— Ҫаплах. Тӑват уйӑх мунча кӗмен. Ҫав хушӑра пылчӑк пит вумай ҫыпӑҫса тулнӑ. Мунча умӗн тараса ҫине ларса пӑхрӑм та 72 кило туртрӑм, мунча хыҫҫӑн — 69 кило ҫеҫ тайрӑм. Тасалӑх пирки 3 кило хухнӑ!

## Зоологи сатӗнче

Йӗпреҫ вӑрманпромхозӗ вӑрман хатӗрлес тӗлӗшпе ыттисенчен чи кайра пырать.

— Ҫак тимӗршапасем ҫине пӑхатӑп та, Лӑпкӑ океанри утравсем аса килеҫҫӗ. Вӗсем картӑ ҫинче тимӗршапа йеверлӗн курӑнаҫҫӗ,— есӗ асӑрхани ҫавна?

— Мана, тимӗршапасем ҫине пӑхсан, вӑл мар, урӑххи — хамӑрӑн Йӗпреҫ вӑрманпромхозӗн вӑрман хатӗрлес ӗҫӗ аса килет.

## Гитлӗрпа хӑйсене хӑйсем вӗлерекенсем

Гитлӗр, Германире хӑйсене хӑйсем вӗлерекеннисем нумайланни ҫинчен илтсен, ҫапла каланӑ:

— Хӑйсене хӑйсем пере-пере вӗлереҫҫӗ тетӗн. Ухмаха йерни мӗн апла вӗсем. Германи ҫӗршывӗн пурнӑҫне аванлатас тесен, йут патшалӑх ҫыннисем йенеле тӗллесе пемеле, тенӗ.

## Васкама хушман

Германире чирлӗ ҫынсене сиплеме емелсем ҫителӗксӗр.

Берлинри тухтӑр вилес патне ҫитнӗ чирлӗ ҫынна рецепт ҫырса тыттарать:

— Акӑ сана рецепт. Унта кӑтартнӑ емел халӗ ҫук, темиҫе ҫултан пулать. Ҫавӑнпа санӑн унччен чир айне пулма йурамасть. Чӑтас пулать. Вилме ан васка. Рецептра кӑтартнӑ емеле ӑша илсенех сывалатӑн.

## Литературсем хушшинче

— Хӑшпӗр чӑвашла хаҫат-журналсенче Пушкин сӑввисене пит пӑсса куҫараҫҫӗ. Ҫав пӑсса куҫарнӑ сӑвӑсене Пушкин хӑй вуласан мӗн калӗ-ши?

— Вӑл-и? Вӑл сӑмахӑн нимӗн те каламӗ, „Не искажай меня без нужды“ романса йурласа ҫеҫ йарӗ.

# Вулакансен жалăбисем

### *Капкăн асатте!*

Кăçал, йанварĕн 12-мĕшĕнче атте мана „Пионер сасси" хаçат 5 çул тултарни çинчен каласа пачĕ. Ун çинчен вăл „Пионер сасси" хаçатра вуланă, тата редакцинче ĕçлекенсем каласа панă. Кăçал „Пионер сасси" хаçат 5 çул тултарасси çинчен редакцире ĕçлекенсем хаçатра çырнисĕр пуçне, ытти хуласенчи пионер организацисене те сырусем йарса пĕлтернĕ, тесе калаççĕ. Ку хыпара илтсен епĕ питĕ савăнтăм. Мĕншĕн тесен кăçал ĕпе те пилĕк çул тултартăм. Çавăнпа та (савăннипе) аттене çыру çыргарса „Пионер сасси" редакцине салам йатăм. Пирĕн аппасем вĕренекен шкулта „Пионер сасси" хаçат пилĕк çул тултарнă йатпа вечĕр пулса иртрĕ.

Акă пайан йубилей кунĕнче тухнă хаçата илтĕмĕр. Мана аппа вăл хаçата пĕтĕмпех вуласа пачĕ. Анчах савăнас вырăнне куљанмала пулчĕ. Унта „пилĕк çул тултарвă йатпа саламлатпăр" тесе çырнă çырусене пĕтĕмпех улгă çул тесе çырса тухнă. Малтан („Пионер сасси" хаçат тухма пуçлани 5 çул тултарăт тени йăнăш пулнă мĕн!)

Епĕ пĕчĕк пулсан та, вунна çитиччен шутлама пĕлетĕп. „Пионер саçсинче" пысăк çынсем ĕçлеççĕ, тет, вĕсем нумай вĕреннĕ, тет. Анчах вĕсем хăйсен хаçачĕ миçе çул тултарнине шутласа кăларма пултарайман. Çакăн хыççăн манăн çапла калас килет: „Пионер сасси" хаçатра ĕçлекенсем вунна çитиччен шутлама пĕлеççĕ-ши? Пĕлмеççĕ пулсан, мĕншĕн Капкăн асаттерен ыйтмаççĕ-ши?

Михаља ывăлĕ.

### *Капкăн йулташ!*

Сан патна епĕ тахçанах çыру çырасшăнчĕ, анчах çырма перо тупаймарăм. Çĕрпу хулинче нихăш магазинра та çырмалли перо тупса илме çук. Хур тĕкĕпе çырса йарас терĕм, анчах тĕкне татса илнĕ чухне хурĕ сăхасран хăрарăм.

Халĕ йала кайса перо тупса килнĕ хыççăн, Çĕрпӳ хулинчи куљтаварсен магазинĕ пуçлăхĕн шкул ачисене перо тупса парасси çинчен шухăшлама ăсĕ çитейменни çинчен сан патна çыру йама май килчĕ.

Емелкин.

### *Тусăмçăм капкăн!*

Пирĕн Тăвай районĕнчи Ураскасси йалне килкелесе курнă ĕнтĕ есĕ. Çапла, çĕмĕрттеретпĕр кăна епĕр — драмкружок членĕсем. „Тухатмăш" пйессăна та лартрăмăр. „Çӳпçипе хупăлчине" те выљаса патăмăр. Çак кружокра пирĕнтен хăшĕсем виçшер çул пĕр кахалланмасăр ĕçлеççĕ, тепĕр çитмĕл çул выљасан та йăлăхмастпăр, теççĕ. Куракансем питĕ йуратаççĕ пире. Йалсовечĕ те пирĕн ĕçе пахалаť. Нумай пулмасť вăл пирĕн хушăмăртан чăн маттуррисене сакăр çын суйласа илчĕ те: „сире преми паратăп" тесе çуршар метр лентă тыттарчĕ. Мĕн тумала ĕнтĕ ку йапалапа, тесе шалт ăнтан карăмăр. Пилĕке çыхма пикентĕмĕр, кĕске—çаврăнса çитмест. „Артиссемпе артискăсем çинçе пилĕклĕ пулма кирлĕччĕ", — тет председатĕл. Епĕр аплах мар вĕт-ха. Вара майсене çыхса йама хушрĕ. „Ку хаклă йышши лентă, сире панă çур метăрĕ çирĕм виçĕ пус тăраť",—тет. Кулма çав тери ăста пирĕн председатĕл. Пирĕн ĕçе хисеп тунă май, кашнине мухтаса кулаť. Епĕр хамăр та кулатпăр. Мĕн тăвас тен, преми илнĕ вĕт, хаваслантăмăр пулаť.

Ултă арçынпа икĕ хĕрача алă пуснă.

### *Капкăн тус!*

Тархасшăн каласа парччĕ: февраљ уйăхĕнче кăçал миçе кун пулаť. Епĕ хам: кăçал февраљ уйăхĕнче 28 кун пулаť, тенĕччĕ. Анчах Çĕрпӳ пуљницинче аслă врач кабинечĕн алăкĕпе йунашар çакăнса тăракан хут çинче февраљ уйăхĕнче кăçал 30 кун пулаť, тенĕ. „План работы райместкома" тесе йат панă хутăн 7-мĕш параграфĕнче: „февралĕн 30-мĕшĕнче обшчи собрани пухса ирттермеле"... „февралĕн 30-мĕшĕнче кĕçĕн контрољ ĕçĕсене вăйлатассине туса пĕтермеле" тенĕ.

Ман шухăшпа 30 кунлă февраљ нихăçан та пулмасť. Йе пурнăç лайăхланнă май, райместкомра ĕçлекенсем, çут тĕнчере ытларах пурăнмала тăвас тесе, уйăхсен кун хисепĕсене нумайлатма шухăш тытнă. Апла пулсан райместкомра ĕçлекенсем „февралĕн 30-мĕшĕнче" обшчи собрани пухса ирттернĕ-ши, йе ирттерейменши?—есĕр телефон тăрăх вĕсенчен ыйтса пăхсан пит аван пулĕччĕ.

Им-й.

### *Капкăн тус!*

Куславкка районĕнчи Чĕнкасси колхозĕ 1936 çулхи доходран лашасем ваљљи 3.000 пăт хăвармали выљăх апатне ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе йачĕ. Йакăвлĕв председатĕлпе Михайлăв счетовод выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана тултарасси çине ерех кĕленчи витĕр пăхса лараççĕ те, çавăнпа пайанхи куна лашасем 10 кĕренке угă çинче тăраççĕ.

Выљăх апачĕ çителĕклĕ пур çинчех лашасене çавăн пек выçăлă-тутăлă усракана мĕнле йат памала? Епĕр „выљăк мурĕ" тесшĕн, ун çинчен сирĕн журнал урлă ытти çынсене пĕлтересшĕн.

Колхозниксем.

### *Тăван пичче Капкăн!*

Пирĕн Çĕрпӳ хулинчи калаçакан кино-театр çуртне кино курма каймала пулсан тăлăп тăхăнса кайас пулаť те, киноран тавăрăнсан тăрпа çумĕнче виçĕ сехет ăшăнас пулаť.

Çурт пуçлăхĕ Белоусăв йулташ кинора ытла ăшă пуласран пач хутмасăрах усраť. Кино пуçлăхĕсене тимĕр сенĕк çеклипе тытса ăшăтма хушмăн-ши?

Георги Шумилăв.

# Пĕтсе çитмен мешченлĕх

Пушкин Варламĕ пек (айалта асăннă сăмахсем) калакан етемсем халĕ те пирĕн хушăра курăнкалаççĕ. Мешченлĕхе тĕппипех пĕтермеле.



— Литва-и, Руç-и, пылак-и, йӳç-и: пире пурпĕрех, пулгăр çеç ерех... акă вăл... кĕрекерех!

М. АЙЗМАН

# „Амлетпа Винигрет“

## ВЫЉАКАНСЕМ:

1. Чиперкин—служăшчи, спектакăле пыракан.
2. Маруççă—кассиршă, билет сутакан.
3. Хутти—станцăна кайакан.
4. Хеврон—мунчана кайакан.
5. Кавкай—столовăйне кайакан.
6. Лари—кинона кайакан.

Декораци: Икĕ чÿрече, пĕр чÿречи çине „кассă“, тепри çине „администратăр“ тесе çырнă. Кассă чÿречи уçă. Чÿречерен Маруççăн пуçĕ çеç курăнаť. Сценă çинче „ГАМЛЕТ“, „ВИНИГРЕТ“ тесе çырса хунă.

Чиперкин (*кĕрет, аллинчи сехечĕ çине пăхса*). Тепĕр пилĕк минут çеç, унтан заседани (*Кассă умне пырса*). Здравствуйте, мадам!

Маруççă. Здравствуйте!

Чиперкин. Билет пур-и?

Маруççă. Пур.

Чиперкин. Кĕçĕр сирĕн „Гамлет“ йатлă пйесă пулаť-и-ха?

Маруççă. Амлет çав.

Чиперкин. Гамлет вăл аван йапала. Кĕрсе курас.

Маруççă. Есĕ Гамлет терĕн-и çав?

Чиперкин. Гамлет çав.

Маруççă. Çук, кĕçĕр Гамлет пулмасť.

Чиперкин. Мĕншĕн?

Маруççă. Пĕлместĕп.

Чиперкин. Мĕн пулаť еппин?

Маруççă. Амлет. Чăн-чăн йачĕ Винигрет.

Чиперкин. Есĕ... мĕн... мăшкăламастăн пуљ те?

Маруççă. Нимĕнле мăшкăл та çук.

Чиперкин. Ман шухăшпа, театăр вăл столовăй мар. Унта амлетпа винигрет хатĕрлемеççĕ пек туйăнаť.

Маруççă. Туйăнаť пулĕ те, пирĕн хатĕрлерĕç.

Чиперкин. Çуралнăранпа та ку хулана пĕрремĕш хут çеç килме лекрĕ те, анчах, мана çынсем тĕрĕсех кăтартса йачĕç пуљ тетĕп. Неушлĕ епĕ йăнăш лекрĕм-и? Ку столовăй пулчĕ-и вара?

Маруççă. Çук, столовăй мар.

Чиперкин. Мĕн еппин?

Маруççă. Театăр.

Чиперкин. Сирĕн театăрта амлетпа винигрет хатĕрлеççĕ-и вара?

Маруççă. Унтан мĕн тĕлĕнмели пур, „Винигрет“ вăл пйесă йачĕ вĕт.

Чиперкин. Аванрах йат тупса хурайман пулаť.

Маруççă. Питĕ илемлĕ йат.

Чиперкин. Тĕлĕнмеле. Мĕншĕн винигрет тесе йат панă?

Маруççă. Драматургсем сахал çырнă пирки, пирĕн, нимĕн лартма аптраççĕ те, пилĕк ултă пйесăран тĕрлĕрен вырăнсене кăларса илеççĕ те, пĕр çĕре çыпăçтараççĕ те, пйесă тăваççĕ. Вот вара çавăн пек пйесăсене „Винигрет“ тесе йат параççĕ те.

Чиперкин. Аха, тавта пуç! Ăнлантăм. Мĕншĕн афишă çине Гамлет тесе çырнă-ха.

Маруççă. Гамлет мар вăл, Амлет.

Чиперкин. Мĕншĕн амлет?

Маруççă. Просто типографинче опечаткă тунă. Вăл çак пйессах. Малтан ку пйесăна амлет тесе йат парасшăнчĕ. Тĕнчере халиччен те амлет йатлă пйесă пулман та... Ну, афишă пичетлекенсем ку амлет мар, Гамлет йатлă пйесă пуљ тесе, Гамлет тесе çырса хунă. Афишине урама çыпăçтарас умĕн администратăр мухмăр пирки „Г“ саспаллине асăрхайман, хуратман. Кайран вара „Амлет“ çав тери йанракан йат мар, тавай „Винигрет“ тесе йат парас, терĕç.

Чиперкин. Вон сирĕн ĕçсем мĕнле кунта?

Маруççă. Нимĕн тĕлĕнмели те çук. Ун пек йапаласем пулкалаççĕ.

Чиперкин. Тата... епĕ сирĕн репертуар çинче Микишăн „Аслати“ йатлă пйесă кайаť тенине илтнĕччĕ. Аван пйесă-и вăл?

Маруççă. Калама пултараймастăп.

Чиперкин. Мĕншĕн?

Маруççă. Çырман пйесă çинчен мĕн калас.

Чиперкин. Çырман пулсан мĕншĕн репертуара кÿртеççĕ-ха?

Маруççă. Репертуарта унта... çырманнисем çуррипе пĕрех.

Чиперкин (*часси çине пăхса*). Ой-ой-ой... Вунпилĕк минут заседанинчен йултăм. Тавай хăвăртрах билет.

Маруççă Çук, еп тин билет сутмастăп.

Чиперкин. Мĕншĕн?

Маруççă. Кассă ĕçлемест, вунă минут вăхăт иртнĕ.

Чиперкин. Пĕр билетшĕн нумай вăхăт иртмест вĕт.

Маруççă. Пултараймастăп. Сана сутатăн, тепри килет, унтан тата...

Чиперкин. Епĕ вăхăт иртиччĕнех килнĕ çын вĕт.

Маруççă. Ну, йурĕ еппин. Миçемĕш рет?

Чиперкин. Пилĕкĕмĕш.

Маруççă. Кÿр укçуна!

Чиперкин. Авантарах вырăн пар. Варĕнчине.

Маруççă. Варĕнчи çук, сутса пĕтернĕ.

Чиперкин. Ну, йураť, пĕрелĕхе хĕрĕнчи те йурĕ. (*Илет*). Ой-ой!.. Çирĕм икĕ минут йултăм! (*Кайаť*).

Хутти (*кĕрет*). Хутти, хосподи! (*Кассăна*). Билет пур-и?

Маруççă. Вăхăт иртнĕ, тепĕр икĕ сехетрен кил. (*Хупаť*).

Хутти (*хыпăнса ÿксе*). Итле-ха, хĕрĕм.. Мана ултă билет çех.

Маруççă. Çук, çук!

Хутти. Манăн ачасем пĕр çын патĕнче кĕтсе лараççĕ.

Маруççă. Ачасене кўртмеççĕ. Калаçмали те çук.

Хутти. Йепле кўртмеççĕ. Епĕ ахаљ мар вĕт, билет илетĕп.

Маруççă. Ачасем ваљљи билет сутмастпăр.

Хутти. Ахалехи вара?

Маруççă. Ачасен каçхине çывăрас пулаť. Вĕсене йатарласа кăнтăрла кăтартаççĕ. Билетне те кăнтăрлах сутаççĕ.

Хутти. Ăçта сутаççĕ?

Маруççă. Пĕлместĕп! (*Кассă чўречине хупаť*).

Хутти. Хутти, хосподи!.. Автобус станци çакăнта терĕç-çке?! Кĕçĕр ларса кайаймасан пойăс çине те ĕлкĕрейместĕп. Кунта ыран каçчен пурăнмала килсе тухсан пĕр талăк хушшинче çул укçине те çисе йарас пулаť. Çук, капла ĕç тухмасť. (*Кассăна*). Ей, итле-ха!.. Грузовик та пулмасť-и? (*Паузă*) Хутти, хосподи!.. Чĕнмест вĕт. Мĕн тăвас? Мĕн тăвас? Çук, кунта ларса ĕç тухмасť. Ăçта та пулсан, камран та пулсан, кайса ыйтса пĕлес пулаť. Грузовиксем час-часах çўрекенччĕ-ха вĕсем. (*Кайаť*).

Хеврон (*кĕрет. Ăллинче сумкă, сумкăран милĕк курăнаť*). Ай-ай!.. Мунчи таса-çке. Халăхĕ те çук иккен. Ну, пĕрре хамăра ирĕккĕн çăвăнатпăр ĕнтĕ. Ĕмĕр тăрăшпех хулари мунчара çăвăнас тесе ĕмĕтленеттĕм. Аранах ĕмĕт çавăрăнса çитрĕ. Мунчин ăшши пурши хăť...Ийăа...йа-а. (*Çаврăнса пăхаť*) .Кин... Ăçта кайса кĕчĕ ман кин... Килтен пĕрлех тухрăмăр-çке, йе пасар урамĕпе тухнă чух уйăрăлса кайрăмăр-и? Ак, ачам! Пĕтрĕмĕрех! (*Паузă*). Е-е, килте, супăљ çук текелеччĕ. Супăљ илме лавкана кĕрсе йулнă ĕнтĕ. Вăл килсе тухаччен билетне илсе хатĕрлем. (*Кассăна*). Билет çакăнта сутаççĕ-и?

Маруççă. Çакăнта.

Хеврон. Мана икĕ билет пар-ха.

Маруççă. Есĕ те килсе курас терĕни, кинеми?

Хеврон. Хам ĕмĕр тăршшипех шухăшласа пурăннăччĕ. Хăçан çакăнта килсе тасалса пăхам-ши теттĕм.

Маруççă. Çапла пулмасăр. Кунта тасалма пулаť. Кунта пĕтĕм ĕлĕкхи йăласенчен тасалма пулаť. Пĕтĕмĕшпех çĕнĕле пурăнма вĕрентеççĕ.

Хеврон. Çак пĕр-ик çултанпа пуçпа аптрарăм та... так... темскер пур пуçра. Хам та пĕлместĕп. Тĕлкĕшет кăна. Çакăнта илсе килсе, кĕçĕр, кин мана тасатас терĕ-ха. Темле хут илнĕ вăл... Шампуљ... шампуљ. Шому... Шоу... тери çав...

Маруççă. Шоу. Пур-пур, ун пек писатĕл пур. Сана вăл апла Шоу çырнă кĕнекесемпе пуçăнтан кирлĕ мар шухăшсене тасатас терĕ пулаť.

Хеврон. Çапла терĕ. Ман кин вăл пултараť. Еп хам, ак, халљ çеç тенĕ пек йалтан ывăл патне, кунта пурăнма куçрăм та... Хам еп кин чухлĕ çук, пултараймастăп. Ийăа... Йа-а!

Маруççă. Ей ним те шарламарăм-çке.

Хеврон. Ийăа... Кинпе кĕрес терĕмĕр çав. Мана икĕ билет парха, хĕрĕм!

Маруççă. Халљ билет сутма вăхăт çитеймерĕха, кăшт тăхтасан кил.

Хеврон. Йа-а?

Маруççă. Кăшт тăхтасан кил тетĕп.

Хеврон. Йурĕçке. Еппин еп кайам-ха. Килтен чей ĕçсе тухрăм та... (*Кайаť*).

Кавкай (*кĕрет*). Апчху!.. Хăйамат! (*Ўсĕр*).

Маруççă. Ак татах çын килчĕ.

Кавкай. Пар-ха пĕр порци амлет, ик!

Маруççă. Кунта буфет касси мар. Кунта амлет сутмаççĕ.

Кавкай. Мĕншĕн „менў“... не... ик... пысăк саспалисемех çапса хунă еппин.

Маруççă. Мĕнле „менў“? Ăçта?

Кавкай (*афишă çине кăтартса*). Акă пăх! „Вини-грет“ тата скобкă ăшĕнче „Амлет“.

Маруççă. Вăл пйесă йачĕ вĕт!

Кавкай. Положĕм, амлетпа винигрет мĕн иккенне санран авантарах пĕлетпĕр ĕнтĕ. Нечевă мăшкăлас!

Маруççă. Итле-ха, епĕ сана каласа ăнлантарам.

Кавкай. Нимĕн ăнлантармалли те çук. Тавай пĕр порци амлет. И-ик!

Маруççă. Калаççĕ вĕт сана „Амлет“ вăл пйесă йачĕ тесе. Вăл çимели йапала мар вĕт.

Кавкай. Амлет мар пулсан еппин винегрет.

Маруççă. Есĕ мĕн кунта... мăшкăлас тетни?

Кавкай. Епĕ мăшкăламастăп, есĕ вăт манран мăшкăлан. Ман çав тери çийес килет. Çав тери хырăм выçрĕ. Ну пар-ха тархасшĕн пĕр порци. Хуť котлет та пулсан пар.

Маруççă. Ни амлет, ни винигрет, нимĕнле котлет та çук. Татах калатăп: кунта столовăй мар. Кунта амлет çимеççĕ, „Амлетне“ кăтартаççĕ çеç.

Кавкай. Винигретне-те-и?

Маруççă. Винегретне те.

Кавкай. Укçала-и?

Маруççă. Укçала.

Кавкай. Мĕн хак?

Маруççă. Ик тенкĕрен пуçласа улт тенкĕне çитиччен.

Кавкай. Пар-ха еппин пĕр билет, кĕрсе курам винигрет.

Маруççă. Çук, халљ билет сутма вăхăт çитменха. Тепрер çур сехетрен кил.

Кавкай. Ак тата... Унчен высса вилес-и. Ну, дудки!.. Урăх столовăйне кайса çийем те, анчах ун чухлĕ кĕтме пултараймастăп. (*Кайаť*).

Лари (*кĕрет*) Билет пур-и?

Маруççă. Пур.

Лари. Пайан мĕнле картинă кайаť.

Маруççă. Есир афишă вуламастăр-и вара?

Лари. Тĕл пулса вулаймарăм çав.

Маруççă. Ăçтисем ха?

Лари. Вăтам Атăл йенчисем.

Маруççă. Апла пулсан татах хуť.

Лари. Чăнах, мĕнле картинă пулаť вара?

Маруççă. „Винигрет“.

Лари. Винигрет. Ха-ха-ха!.. Пит кулăшла пулмала. Йачĕ те пит интереснăй та...

Маруççă. Кулăшлине пĕлместĕп. Кĕçĕр пĕрремĕш хут çеç кайаť-ха.

Лари. Кунта ĕнтĕ сирĕн каласаканни пулљ-ха.

Маруççă. Йурласа вылљакансем çукрахха пирĕн. Каласса вылљаççĕ.

Лари. Миçе сеанс пулаť.

Маруççă. Пĕрре çех.

Лари. Апла пулсан мана 2 билет пар-ха. Мĕн чухлĕ тăраť-ха?

Маруççă. Пĕререн пуçласа виççе çитиччен.

Лари. Ой-ой-ой!.. Ыгла та хаклă-çке, ăçта çăвапатне... Пирĕн йалта пĕр тенкĕ тўле те хут те йăлăхиччен пăх. Ун чухлĕ тўлесен... Укçа çитмест. Пĕр билет çеç илес-и. Чăнах та пĕр билет илес. Кўр-ха еппин пĕр билет!

Маруççă. Халĕ вăхăт çитмен-ха. Кăштах тăхтасассăн кил.

Лари. Мана пĕр билет çех.

Маруççă. Вăхăт çитмен! (*Чӳречине хупать*).

Лари. Ей-ей-ей!.. Ан хуп-ха!

Маруççă Вăхăт çитмен терĕмиç?

Лари. Тархасшăн уç-ха ĕнтĕ. Кунта килсе тухнă чух кĕрсе курам пĕрех хут.

Маруççа. (*уçса*). Мĕн ухмаха йернĕ çын пек палкаса тăратăн? Каланă сана вăхăт çитмен тесе. Тепĕр çур сехетрен кил.

Лари. Пĕр билет çех...

Маруççă. Сутмастăп. (*Хупать*).

Лари. Бӳрократкă! (*Администратăр чӳречинчен шаккать*). Йулташ, администратăр!.. Администратăр йулташ!..

Маруççă (*администратăр чӳречине уçса*). Администратăр çук.

Лари. Ăçта кайнă?

Маруççă. Пăта шырама командировка кайнă.

Лари. Тĕлĕнмеле. Пăта мĕн тума кирлĕ-ши вĕсене кунта. Шуйтан пĕлети вĕсене (*кайать*).

Хутти (*кĕрет*). Ниçта та тупаймарăм. Кассă халех уçăлать пуљ-ха. Çын çукки пит аван-ха ку.

Хеврон (*кĕрет*). Билет сутма пуçламан-и-ха?

Хутти. Çук.

Хеврон. Çынсем кĕтнине кĕтес пуљ ĕнтĕ, хамăн та.

Кавкай (*кĕрет*). Халљ те пуçланмани-ха?

Хутти. Çук-ха.

Кавкай. Çитмен столовăй хăвармарăм пуљ, пур çĕрте те хупă. Пĕр çĕре пыран—перерыв. Тепĕр çĕре пыран — перерыв. Ну тарăхнипе татах кунта килес терĕм. Кунта, пур столовăй та пилĕкрен пуçласа çиччĕчен перерыв тăвать иккен.

Хутти. Ăна ес халиччен те пĕлмен-и?

Кавкай. Пĕлмен.

Лари (*кĕрет*). Есир пурте билет патне-и?

Хутти Пурте.

Лари. Епĕ мала тăратăп. Мĕншĕн тесен еп пaçăрах черет йышăнса хăвартăм.

Хутти. Хутти, хосподи, ара... еп хам та иккĕмĕш хут килтĕм.

Кавкай. Еп те иккĕмĕш хутчен...

Хеврон. Епĕ те.

Лари. Кам хӳринчен еппин.

Кавкай. Епĕ.

Лари. Епĕ тăваттăмĕш апла?

Маруççă (*чӳрече уçса*). Ну кама билет?

Хутти. Манăн малтанхи черет. Мана пар-ха улт билет.

Маруççă. Партера йе балкона-и?

Хутти. Ăнланмарăм. Мĕн терĕр?

Маруççă. Айала йе çӳле, тетĕп?

Хутти. Выранĕ пĕрех пуљ те... Айала пар!

Маруççă. Миçе билет?

Хутти. Ултта.

Маруççа. Хăш рете?

Хутти. Ăçта вырăн пур, ça вăнта!

Маруççă. Миçе тенкĕлĕххине.

Хутти. Мĕн? Мĕскерле станца?

Лари. Ей, йулташ, ес кунта автобус станци терĕним?

Хутти. Ку автобус станци мар-и вара?

Лари. Мар.

Хутти. Хутти, хосподи! Автобус станци ăçта вара.

Лари. Ак кунта йунашарах.

Хутти. Ех!.. Çиччĕмĕш сехетре кайакан автобусран йултăм пуљ.

Маруççă. Йулман, йулман! Вунпилĕк минут-ха çиччĕ çитесси.

Хутти. Ара, хутти хосподи!.. (*кайать*).

Маруççă. Автобус станци шырама кунта килнĕ... ха-ха-ха!...

Лари. Чăнах та вĕт... ха-ха-ха!..

Кавкай. Вот тăк ухмах!.. Ха-ха-ха!..

Хеврон. Ку çынăн пит мыскаралă пулчĕ вара, хе-хе-хе!...

Маруççă. Малала камăн черет?

Хеврон. Манăн пулмала.

Маруççă. Сана миçе билет?

Хеврон. Икĕ билет те-ха... Манăн кин çаплах çитмерĕ-ха. Кала-ха: Мунчинче ăшши пур-ши хуть?

Маруççă. Мĕн тен?

Хеврон. Ăшши пур-ши, терĕм те...

Лари. Ес кунта мунча терĕним? Ха-ха-ха!..

Кавкай. Вот тăк тĕнч-е!. Ха-ха-ха!..

Хеврон. Есир ан кулăр-ха. Мана çакăнтах терĕç те...

Маруççă. Мунча акă, кунтан тухсанах, йунашар!

Хеврон. Е-е, пĕлмен, пĕлмен! Ек-кей, кин мана çухатрĕ пуљ (*кайать*).

Маруççă. Малала камăн черет.

Кавкай. Манăн. Мана пĕр порци винигрет. И-ик!..

Маруççă. Паçăрах каларăм сана. Кунта винигрет сутмаççĕ.

Кавкай. Мĕн сутаççĕ еппин.

Маруççă. Нимĕн те сутмаççĕ. Сан пек ӳсĕр çынсене кунта кӳртмеççĕ те.

Лари. Итле-ха, йулташ, ес кунта столовăй терĕним. Ку вĕт, столовăй мар.

Кавкай. Мĕн еппин?

Лари. Ку театăр

Кавкай. Театăр.. Вот те раз. Неушлĕ ку театăр пулчĕ-и... Столовăй ăçтарах вара?

Лари. Акă кунтан тухсанах пĕр столовăй пур, паçăр куртăм. Йара пар!

Кавкай. Ну, тавта пуç сире! (*Пуçне тытса пăхать*). Фу, урăлсах карăм (*кайать*).

Маруççă. Йепле тĕлĕнмеле çынсем кĕçĕр. Ха-ха-ха!..

Лари. Кулса вилес пулать. Ха-ха ха-ха..театăр ăçта ларнине те пĕлмест!

Маруççă. Ну, сана миçе билет?

Лари. Мана пĕр билет çеç. Иккĕ илес тенĕччĕ те, питĕ хаклă, укçа çитеймест. Савнă хĕрĕм кураймасăрах йулать ĕнтĕ.

Маруççă. Ес малти рете ан ил, кайрисем йӳнĕрех.

Лари. Мĕнле апла пултăр-ха. Пирĕн йалта кăтартнă чух малти ретсене йӳнĕ тăваççĕ-çке.

Маруççă. Ăна, кино-театăрсенче çеç апла тăваççĕ.

Лари. Ку кино-театăр мар-и?

Маруççă. Çук, ку драм театăр.

Лари. А-а?!. Еп кино-театăр тесе, кунтах терĕç те... Ну сывă пул! (*кайать*).

Маруççă. Урăх никам та çук-и унта? (*Чӳречерен пуçне кăларса пăхать*). Аха... акă... килеççĕ иккĕн.

Чаршав.

# МУЗЕЙРИ ПОРТРЕТ

Музейре сивĕпе хаклă картинсем пасарса пĕсăлаççĕ.




**ПУШКИН** *(халатпа витĕнсе):*

Пĕлĕте хуплаť çил тăвăл,
Чарăнмасăр йур вĕçет,
Музейе те кĕркелет вăл,
Хўтлĕхсемшĕн кĕвĕçет;

Пирĕн кивĕ пĕчĕк пўлĕм
Пит салхулă сивĕре,
Йурĕ ирĕлсессĕн ўлĕм
Ăшă кансĕрлĕ пире.

# Виçĕ тус

(*Халлап*)

Ку ĕç халĕ мар, авалтарах пулса иртнĕ. Епĕ ăна хам шухăшласа кăларман. Çынсем каланине илтнĕ.

Пĕр йалта Чанкка йатлă чухăн чăваш пурăннă. Вăл тĕрлĕ меслетсемпе хăйĕн чухăн пурнăçне йусама тăрăшнă. Анчах пурнăçĕ нимпе те малала кайман. Аптăраса çитсен çемйине пăрахса, çурăмĕ хыçне кутамкка çакса тĕнче тăрăх ĕç шырама тухса кайнă.

Çулла. Шăрăх, хĕвел хĕртсе пăхнă. Ура айĕнчи çĕр вутла пĕçернĕ. Питсăмартисем тăрăх шапăртатса тар тумланă. Кун иртнĕ те çĕр пулнă. Утсан-утсан Чанкка пĕр тутара тĕл пулнă:

— Ăçта кайатăн, пĕлĕш? — тесе ыйтнă Чанкка.

— Тĕнче тăрăх ĕç шырама,—тесе пĕлтерне тутар.

— Пĕччен йут çĕршывра çӳреме кансĕр. Айта иккĕн тус пулар. Ĕç тупсан пĕрле ĕçлетпĕр. Мĕн ĕçлесе илнине çурмала уйăрăпăр, — тенĕ Чанкка.

— Айта, — тенĕ тутар килĕшсе.

Унтан икĕ тус пĕрлешсе малала утнă. Кайсан-кайсан ларса тапак туртнă. Кансан каллех тăрса утнă. Пырсан-пырсан вĕсем тепĕр вырăса хуса çитнĕ

— Ăçталла çул тытатăн, земљак? — тесе ыйтнă.

— Хулана, ĕç шырама, — тенĕ вырăс кĕскен.

— Айта пирĕнпе, виççĕн тус пулăпăр. Пĕрле ĕçлĕпĕр. Мĕн ĕçлесе илнине виççе уйăрăпăр, — тенĕ Чанккапа тутар.

— Йурать, — килĕшнĕ вырăс.

Унтан виçĕ тус: чăваш, тутар тата вырăс пĕрлешсе, вăрăм çула кĕске туса малала кайнă.

Туссем, çырмасем урлă каçнă. Хура вăрмансем витĕр тухнă. Кайсан-кайсан вĕсем çул хĕрринче пĕр упа вилли тупнă.

— Туссем, айтăр çак упа тирне сӳсе илер, — тенĕ пĕри.

— Мĕн тăвăпăр унпа?

— Хулана çитсен сутăпăр та, укçа тăвăпăр, укçипе ĕçме-çиме илĕпĕр.

— Чăн çапла тумала!

Çавăнтах упа тирне сӳсе илнĕ те, йатса утнă. Чылай кайсан-кайсан:

— Мĕншĕн йатса пыратпăр-ха епĕр ку упа тирне? Айтăр хӳринчен тытса сĕтĕрсе пырар, — тенĕ пĕри.

— Чăн, сĕтĕрсен çăмăлтарах пулĕ,—тенĕ тепри.

Унтан упа тирне виççĕн хӳринчен тытса сĕтĕрнĕ. Утсан-утсан Чанкка пуçне каллех çĕнĕ шухăш çитсе кĕнĕ:

— Мĕншĕн ахалех сĕтĕрсе пыратăр-ха ку тире? Айтăр иккĕн сĕтĕрер, пĕри тир çине ларса канса пытăр, — тенĕ Чанкка.

— Кам мĕн чухлĕ ларса пырассине ăçтан чухлапăр, пирĕн вĕт сехет çук, — тенĕ вырăс.

— Ăна чухласси ним те мар, кам мĕн чухлĕ йурлать, çавăн чул ларса пырать тир çинче. Йурри пĕтсен анать, — тенĕ Чанкка.

— Ну, малтан епĕ ларам, — тенĕ вырăс тир çине ларса.

— Лар. Йурру пĕтиччен йурла.

Чанккапа тутар упа тирне хӳререн сĕтĕрнĕ. Вырăс йурра чăснă:

— Разлука ты, разлука,
Чужая сторона!..

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Маруся отравилась
В больницу повезут...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Унтан вырăс тата пĕр-икĕ йурă йурланă та:

— ман йурă пĕтрĕ, — тенĕ тир çинчен анса. Тутар улăхса ларнă.

Вырăспа Чанкка тире сĕтĕрнĕ. Тутар йурра йанă:

— Ак-Идĕл пуйлара,
Кĕмĕш кĕпĕк сулара...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Аккăш кӳллĕрте була.
Бăрăнă сулартă була...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Тутар та тепĕр-икĕ йурă йурланă та:

— Урăх йурлама пултараймастăп. Йурă пĕтрĕ, — тенĕ тир çинчен анса.

— Ну, халĕ ĕнтĕ мана черет çитрĕ—тенĕ Чанкка.

Вырăспа тутар упа тирне сĕтĕрнĕ. Чанкка йурла пуçланă:

Лутрайах та шĕшкĕ,
Сарă мăйăр...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Тăванăм-тăванăм
Мĕн тăвар та
Ыталанса чуптăвар...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Чанкка пуçланă йуррине те йурласа пĕтереймен, вĕсем пĕр йала çитсе кĕнĕ.

— Ну, туссем, ку йалта каç выртар, — тенĕ Чанкка, тир çинчен анса.

Йалти çынсем вĕсем çине пăхса тĕлĕннĕ:

— Мĕнле кулăшла çынсем кусем? Пĕри упа тирĕ çинче йурласа ларса пырать. Иккĕшĕ ăна сĕтĕреççĕ — тенĕ. Пуринчен ытла ача-пăчасем вĕсене курма пуçтарăннă.

— Епĕр упа ташлатса çӳрекенсем. Анчах упаватăлса вилчĕ те, халĕ ĕнтĕ тирне çеç сĕтĕрсе килетпĕр, — тенĕ Чанкка. Çынсем чăнах та ĕненнĕ.

Унтан вĕсем йал варринче пĕр тимĕр витнĕ çурта хăватере кĕнĕ. Ĕçнĕ-çине хыççăн, çывăрма выртнă.

Вырăспа тутар çул килсе ывăннăскерсем выртсанах çывăрса кайнă. Чанкка çывăрайман, ăна хăнкăласем кăшланă. Вăл пĕр айакки çинчен тепĕр айакки çине çĕклене-çĕклене çапăннă. Çапла вăл хăнкăласемпе çапăçса выртнă вăхăтра сасартăк чӳречерен пĕри: шăк-шăк шакканă. Чанкка тăрса пăхнă. Чӳрече умĕнче пĕр вăрăм çӳçлĕ çын тăнă: „Кам ку? Хĕрарăм-и?“ — тесе шухăшланă. Унтан палланă. Хĕрарăм мар, пуп пулнă: „Е-е, ку хуçа килте çук чухне, ун арăмĕ патне хăнана килнĕ“ — шухăшланă. Унтан сассине çинçетсе:

— Мĕн кирлĕ?

— Упăшку килте-и? — тесе ыйтнă пуп.

— Кам пултăн-ха есĕ? Паллаймарăм, — тенĕ Чанкка çинçе сассипе.

— Курмастăним, пачăшкă!

— Упăшка килте çук та, анчах ман патра хăй упа ташлатса çӳрекенсем çывăраççĕ, — тесе пăшăлтатнă Чанкка.

— Апла пулсан, тула тух, — тенĕ пуп.

— Çук, тухма йурамаст, вĕсем шăп алăк йанаххи умĕнче выртаççĕ, — тенĕ Чанкка.

— Апла пулсан, пĕреххут чӳрече витĕр те пулин чуптутар, — тесе йăлăннă пуп.

Чанкка чӳречене майĕпен уçнă та:

— Ме, чупту!

Пуп, чуптăвас тесе, тутисене мăкăртса, чӳречерен пуçне чикнĕ. Чанкка пĕтĕм вăйĕпе ахлатса, пупа çăварĕ урлă чышкипе шартлаттарнă. Леш пĕр хăранипе, пĕр ыратнипе сысна пек çухăрса çĕре йăванса ӳкнĕ. Унтан васкаса сиксе тăнă та, çавăрăнса пăхмасăр тарнă. Кăсйинче пĕр кĕленче ерех пулнă, çав тухса ӳксе йулнине те сисмен.

Пуп курăнми пулсан, Чанкка чӳречерен тухса, ерех кĕленчине илсе кĕнĕ.

Çеникре, хăна килессе çывăрмасăр кĕтсе выртакан хуçа арăмĕ, пӳртре сас пуррине илтсен кĕнĕ.

Мĕн çывăрмастăр? — çиленсе ыйтнă.

— Чӳрече витĕр вăрă кĕме тăчĕ, çавна хăратса йатăм, — тенĕ Чанкка.

„Ах, çавă пулнă ĕнтĕ. Урăх никам та мар. Мĕншĕн епĕ сире хаватере кӳртрĕм-ха?“ тесе шухăшланă хуçа арăмĕ. Унтан кăмăлсăр пулса, хăй вырăнне тухса выртнă.

Чанкка, çывăрман. Унăн çак ĕçе тăрă шыв çине кăларасси килнĕ. Кăшт выртсан вăл чӳрече витĕр тухнă та, çеник алăкне: шăкăр-шăкăр шакканă.

— Кам унта? — тесе ыйтнă хуçа арăмĕ.

— Епĕ, уç, — тенĕ Чанкка пуп пек хулăн сасăпа.

Хуçа арăмĕ сассине труках уйăрса илеймен. Çавăнпа тепĕр хут ыйтнă:

— Кам вара есĕ?

— Паллаймарăн-им, пачăшкă!

Хуçа арăмĕ хăвăрт тăрса уçса кӳртнĕ:

— Епĕ килмест пулĕ тесе, кĕтрĕм-кĕтрĕм те çывăрах пуçланă.

Чанкка, ан паллатăр тесе, сассине кăларман.

— Çийессӳ килет-и? тесе ыйтнă хуçа арăмĕ.

— Килет. Мĕн хатĕрлерĕн?—пăшăлтатнă Чанкка.

— Есĕ пăртак кĕтсе лар. Епĕ халех, — йăпăрйăпăр пӳрте кĕрсе пĕр çатма çуллă икерчĕ, тепĕр типĕтнĕ хур йатса тухнă: — Çи, хаклă хăна, çи, — тесе сĕннĕ.

Чанкка пĕр шарламасăр хур ашне тата-тата хыпса чăмланă. Çисе йарайманнине кăсйине тултарнă. Пилĕк минут хушшинче пĕр çатма икерчĕ, пĕр хур çук пулнă.

— Тăрантăн-и? — тесе ыйтнă хуçа арăмĕ.

— Тавтапуç. Тăрантăм, — тенĕ Чанкка, хăй как какăрнă.

Çав вăхăтра килкартинче шăптăр-шаптăр туни илтĕннĕ!

— Тпру!

Хуçа арăмĕ Чанкка çумĕнчен вĕри шывпа сапнă пек сиксе тăнă.

— Ах! Пĕтрĕмĕр. Ăçта пытарас сана? Упăшка пасартан тавăрăнчĕ, — васкаса ӳкнĕ хĕрарăм.

— Ан хăра. Епĕ леш упа ташлатакансен çумне кĕрĕп те выртăп. Упăшку çывăрсан тухса кайăп,— тенĕ Чанкка.

— Хăвăртрах, хăвăртрах! — васкатнă хуçа арăмĕ.

Чанкка пӳртеле кĕрсе кайнă. Çав вăхăтрах çеник алăкне тӳн-тӳн! шакканă:

— Уç, илтместĕним тавăрăннине! — кăшкăрнă упăшки тултан.

— Ах, илтмен çав. Хытах çывăрса кайнă, — айăплăн йăпăлтатнă хĕрарăм упăшки умĕнче.

— Пайан иртенпе çимен. Хатĕрле хăвăртрах апат! — тенĕ упăшки арăмне.

— Епĕ кĕçĕрех килмест пулĕ тесе, ним те хатĕрлемен. Кăшт хур ашĕ пурччĕ, ăна упа ташлатса çӳрекенсене çитерсе йатăм, — тесе йăпăлатнă арăмĕ.

— Есĕ йалан çапла, епĕ тавăрнасса кĕтместĕн,— вăрçнă упăшки. Унтан пӳртне кĕрсе лампă çутнă та, пĕр чĕлĕ çăкăр касса илсе, тăвар сапса, шывпа сыпса çийе пуçланă

Хĕрарăм упăшки умĕнче ним пулман пек йăпăлтатса, калаçса ларнă.

Виçĕ тус харлаттарса çывăрнă пек выртнă. Чанкка çывăрман, вăл йури çывăрам пек пулса, куçĕсене хупса выртнă. Кăшт выртсан Чанкка вăранам пек пулса, пуçне çĕклесе пăхнă:

— А-а-а... хуçа та тавăрăннă. Аван-и! — тесе карăннă Чанкка.

— Аван. Тăр. Лар манпа апат çиме, — тесе ырсунса чĕннĕ хуçа.

— Ху пуйан. Çуртна тимĕрпе витнĕ. Çапах та есĕ пит начар пурăнатăн. Шывпа çăкăр çеç çийетĕн, — тенĕ Чанкка кулса.

— Арăм пит хытă ман. Епĕ ăçтан та пулсан тавăрăннă çĕре нихăçан та нимĕн та хатĕрлемест, — тенĕ хуçа кăмăлсăр пулса.

— Хытă пулĕ çав. Вăл пире те нимĕнле апат та хатĕрлесе çитермерĕ, — тенĕ Чанкка. Унтан вырттнă çĕртен тăрса, сĕтел çине пĕр кĕленче ерех кăларса лартнă. Хур тукмаккисене тата çуллă икерчĕ кăсйинчен кăларса хунă.

Хуçа арăмĕ Чанкка çине тĕлĕнсе пăхнă. Тĕсĕ пĕрре шуралнă, тепре хĕрелнĕ.

— Арăму хытă пулсан хам хăна туса хăварам хут, — тенĕ Чанкка. Унтан тусĕсене вăратнă. Лешсем те Чанкка çине шăтарас пек пăхнă:

Есĕ ăçтан тупрăн ку ĕçме-çимене? — тесе ыйтнă.

— Ăçтан тупнине ыйтса ан тăрăр. Ларăр, ĕçĕр те çийĕр, — тенĕ Чанкка. Унтан хуçана та, арăмне те, тусĕсене те ерех тултара-тултара панă. Пĕрне-пĕри тав туса ĕçнĕ.

Хуçан кăшт пуçĕ хĕрсен:

— Маруçça, хут кăмака, пĕçер икерчĕ, ларт сăмавар, шаритле хуркакайĕ,—тесе хушнă. Хăй кӳршине кайса ерех тупса пынă. Ĕлĕк упăшкине итлемен арăмĕ çĕнĕ çын пек йăпăртатса çӳренĕ. Кăмака çуннă, икерчĕ пиçнĕ, сăмавар вĕренĕ, хур ашĕ шаритленнĕ.

Çапла çутăличчен виçĕ тус хуçа патĕнче хăна пулнă. Çутăлсан хуçапа арăмĕ ăсатса йанă:

— Иртсе-çӳренĕ чух тата кĕрсе çӳрĕр, ырă çынсем, — тесе йулнă.

— Хуçа, сан улма пахчине пĕр сысна кĕме вĕреннĕ, — тенĕ Чанкка йуптарса.

Анчах хуçа ним те ăнланман.

— Сывă пулăр. Спаçипă каланăшăн. Епĕ вăл сыснана... тесе йулнă хуçа.

Виçĕ тус: иккĕш упа тирне сĕтĕрнĕ, пĕри йантаратса йурланă. Вĕсем йалтан тухса кайнине çынсем тĕлĕнсе пăхса тăрса йулнă.

М. Н. Данилăв-Чалдун.

# ВУТПУҪҪИСЕМ

**Тӑрмӑшри** (Тӑвай районӗ) кӗсре чуптармали пунктӑн пуҫлӑхӗ Пикки Микули, кӗсресене чуптарас плана тултарса районта пӗрремӗш вырӑн йышӑнас тесе, „Зайкӑ“ йатлӑ хусах лашана кӗсре вырӑнне кӗртсе ӑратлӑ ӑйӑрпа чуптарнӑ тесе райҫӗрпайне ҫведӗни панӑ. Ҫавна илтсен Ваҫлей пиччен сар чӑххи ҫӗрӗпе кашта ҫинче кулса ларнӑ, тет. (Ушаков).

**Усӑлӑ йалӗнчи** (Павлӑ районӗ, Тутар республикӗ) вулав ҫурчӗ хватер шырама тухса кайнӑ. Август уйӑхӗнчен вара ҫичӗ хватерте пулнӑ. Килес ҫулччен миҫе хватерте пулассине йалсовет председателӗ те пӗлмест. (Р. М.).

**Кушкӑри** (Трак районӗ) тулли мар вӑтам шкул пуҫлӑхӗсем, ачасем шкул ҫӗрӗ ҫине лартса тунӑ 8 пӑт суханран, пыл тӑвас тесе пулас, 47 пуҫ купӑстапа 26 паранкӑран варени тӑвас тесе пулас, вӑл ҫимӗҫсене хӗлле тула кӑларса хурса шӑнтса йанӑ. Анчах шухӑшлани пулайман, шкул директӑрӗн йапӑх ӗҫӗсене кӑтартакан фактсем ҫеҫ пулнӑ. (Ан. Вузай).

**Тӑвай** районӗн центӑрӗнче пурӑнакансем тӑлӑпсем йама ыйтаҫҫӗ. Тӑлӑп пулмасан унти „Социалисӑмла куљтурӑ“ ҫуртне кино, ҫпектакӑљ, вечӗр курма пыма ҫук, унсӑрӑн шӑнса простудӑ пулма пултарать, мӗншӗн тесен дириктӑр Антонӑвӑ — вӑл ҫурта нихӑҫан та хуттармасть. Тӑлӑп пулмасан, чаппансем йарсан та йурать, теҫҫӗ. (Тихӑн Турхан).

**Сӗнтӗрпуҫӗнчи** (Сӗнтӗрвӑрри районӗ) вулав ҫуртне ҫӳрекен Тихӑнӑв избач вырӑнне, „ҫук, ҫук“ теме пӗлекен попугайа усрама шухӑшлаҫҫӗ. Тихӑнӑва укҫа парса усраччен, „ҫук“ (кӗнекесем) теме пӗлекен попугайа усрасан усӑллӑрах та, интересллӑрах та пулӗ, теҫҫӗ унти вулама йуратакан колхозниксем. (Шевле).

**Хаклӑ ӗҫ.** Йӑлкӑшри (Елӗк районӗ) „Ҫӗнӗ вӑй“ колхозри М. Ҫтепанӑв бригадир Вонифатийӗв Иоҫифа пӗр кун ҫава туптанӑшӑн тата аврисене лартнӑшӑн 18 ӗҫкунӗ панӑ. Ӗҫкунӗ ун чухлӗ мӗншӗн панине пӗлме „тус“ тенӗ сӑмах мӗне пӗлтернине пӗлмеле. (Дунай).

**Вӑрӑмпуҫӗнчи** (Канаш районӗ) йалсовет председателӗ Кротӑв Н. Р. кирек мӗнле кампанийе те четвӗрт кӗленчи ӑшӗнче иртерсе йарать. Ҫавӑнпа укҫа-тенкӗпе ҫулйӗр планӗсене тултарас тата уйрӑм хуҫалӑхсене ҫуракине хатӗрлентерес ӗҫсем икшер урисемпех уксахлаҫҫӗ. (Буй).

**Улатӑрти художӗствӑлӑ гравйурӑ техникумӗнче** вӗренекенсем халиччен программӑна кӗмен заљати — обшчежитине таварӑннӑ хыҫҫӑн сивӗпе шӑлсене шаклаттарса лармали заљати туса иртереҫҫӗ. Епӗр дирекцийе, ванчӑк кӑмакасене йусаттарманшӑн хӗртсе йаратпӑр. Хӗртсе йанӑ хыҫҫӑн обшчежитинчи ӑшӑ градӑсӗ те хӑпарма кирлӗ. (А. Алгай, А Шупуҫ).

**Упа хӗлӗпе ҫывӑрать,** Мӑчкавӑшри (Хӗрлӗ Чутай районӗ) Чапайӗв йачӗпе тӑракан колхозри Осоавиахим организацин ҫекретарӗ Упа Пурисӗ йӑшӑлт тапранмасӑр виҫӗ ҫул ҫывӑрать. Выртан каска мӑкланать, теҫҫӗ ваттисем. Мӑчкавшри выртан каска та мӑкланнӑ, сухалланнӑ, теҫҫӗ. (Фадейӗвпа Чеблуков).

---

## *Ӗапкӑн кукка!*

Ӗшенчӗк те пулсан, сана ҫак ҫырӑва ҫырса пӗлтерем-ха. Епӗ Мӑн Тукташ ҫынни. Пӗлетӗн пуљ — Елӗк районӗнчен. Мӗн ҫуралнӑранпах ҫак йалӑн гражданинӗ пулса пурӑнатӑп. Чухӑнччӗ ӗлӗк, халӗ, колхоза кӗнӗренпе, пурнӑҫ ҫителӗклӗ. Ҫапах тарӑхатӑп. Каҫ пулсан, ниҫта кайса та вӑхӑта ирттерме май тупаймастӑп. Акӑ, ӗнер ҫеҫ-ха, хаҫат вулама тесе карӑм: „Мӗн хаҫачӗ пултӑр кунта сан ваљљи?“ — тесе шӑпӑрпа хӳтерсе кӑларчӗ мана пӗр шӑлсӑр сторожихӑ. Хамах айӑплӑ пултӑм пулӗ ҫав... Вулав ҫурчӗн пуҫлӑхӗ виҫӗ ерне ҫухалса ҫӳрет иккен те, епӗ ҫав карчӑка йатлаҫтарса ҫӳретӗп пулать. Йалсовет канцељарине пырса кӗтӗм. Ҫапах (хам айӑплӑ пулсан та) жалӑбӑ пама пуҫларӑм. Хаҫат вулас килетчӗ те манӑн, тупса параймӑр-ши? — тетӗп. Вулав ҫуртне кайас пулать, — терӗ, ҫӑварне алтӑви пысӑкӗш чыкаркӑ хыпнӑ председателӗ. Епӗ унта пулнине каларӑм. „Хӑвӑн ҫырӑнса илес пулать... Кунта килекен хаҫатсем хамӑра тапак туртма та ҫитмеҫҫӗ, — терӗ председателӗ. Епӗ „Канаш“ та „Капкӑн“ та ҫырӑнса илетӗп, тата ытти хаҫатсене те вулас килет вӗт-ха, тетӗп. Ыттисене те ҫырӑнса илме хушрӗ председателӗ. Вӑл хушнӑ тӑрӑх, манӑн мӗн пурӗ ҫитмӗл икӗ йатлӑ хаҫат — пӗр пин те тӑватӑ ҫӗр тенкӗлӗх ҫырӑнса илес пулать. Колхозлӑ йал халӑхӗн вулав ҫурчӗ хупӑ тӑрать тесе вӑл ҫурта ман патӑмра уҫасшӑн-и вара есӗ? — терӗм. Апла мар та, — терӗ председателӗ, — куљтурӑлӑрах пурӑнас пулать ҫав, терӗ. Епӗ вара чӗнмерӗм. Чӗнсен те ыррийех пулаҫ ҫук, терӗм. Мӗншӗн тесен, хӑй те вӑл куљтурӑ мӗн тӗслӗ пулнине пӗлмест. Канцељарийӗн урайне иртнӗ ҫуркуннерен вара, сурчӑксӑр пуҫне, пӗр тумлам шыв тивертмен. Вӑл урайӗнчен пирӗн колхозӑн вите урайӗ ҫитмӗл ҫичӗ хут тасарах та, ҫутӑрах та. Шкап тӑрринче иккӗмеш пилӗкҫуллӑх пуҫланиччченех каласма чарӑннӑ радио репродуктӑрӗ карӑнса ларать — ерешмен карти сӑрса илнӗ ӑна. Тем каласан та, Капкӑн кукка, ҫав председателӗ каламасан та — епӗ хам килӗмре куљтурӑлӑрах пурӑнатӑп. Акӑ тин ҫеҫ вӑрлӑх суртласа килтӗм-ха. Апат ҫитерчӗ те арӑм, патефона майларӑм. Тӑнкӑлтатса кӑна ларать. Ача ташлать. Арӑмпа иксӗмӗр куҫран куҫа пӑхса кулатпӑр. Хамӑртан мар — хамӑра пурӑнма вӗрентекен куљтурӑ ҫурчӗсем пиртен те куљтурӑсӑр пурӑннинчен вӗсемшӗн вӑтанса кулатпӑр. Сывпул покка, капкӑн кукка! Е.

## ПЕРЕПИСÇРЕ

**— Мĕн, Çитăрка, шкула кайма чĕнме килтĕн-и?— терĕ Машук кинеми ватăпа пĕркеленнĕ питне шăлкаласа.—Епĕ килтех вĕренетĕп, мана Марйе кин вĕрентет.**

**— Çук! Унпа мар. Пĕтĕм çĕршывĕпе перепис тăватпăр, халăх мĕн чухлине тата мĕнле ĕçпе пурăннине пĕлесшĕн.**

Апла каласан Хветĕр мучин çĕнĕ пӳртĕнче патефон итлеме пынисем шăпах чарăнчĕç.

— Çын шутне пĕлсе мĕн тăваççĕ-ха вара? Ара, çав Вађак арăмне тăхăр ачашăн темиçе пин тенкĕ панă, тет. Киле килсен виç кун çемйипе шутларĕç, тет. Апла вĕрентсен кайрĕ вара хунаса...

— Хунас пулат̆ çав, кинеми! Пирĕн пек йышлăланакан çук тĕнчипе те. Халĕ те пирĕн кашни çул 3 мĕлйун çын хутшăнат̆.

— Виçĕ мĕлйун?! Мĕлйун! Кай! Марйе кин, есĕ мана çав мĕлйун çинчен вĕрентмерĕн вĕт. Мĕн чухлĕ, ара, вăл? Вăрçă вăхăтĕнче темиçе ункăлă укçасене çапла каламасчĕç-и çав, кин!— ыйтрĕ Машук инке кăмака çинчен ансах.

— Вăл пин хут пин тата çавăн чухлĕ виççĕ пулат̆. Вăт хамăр йалта пин çын, çавăн чухлĕ пин йал тата виçĕ хут ытларах,—ăнлантарчĕ Çитăрка кинемейе. Кинемей тĕлĕннипе аллипе пĕççи çине ухлатса çапса тăчĕ.

— Пĕр сăмахпа, кашни çул Финљанди! Кăçал Финљанди чухлĕ,—пыр та калаç пирнпе,—хушса ăнлантарчĕ кинемейе Çитăрка.

Машук кинеми Финљанди таврашне пĕлмерĕ, анчах халăх хытă йышланнине лайăх ăнланчĕ.

Н. Чурпай.

## АСРА ТЫТМАЛА

Хăш пĕр шкулсенче гимнастикă тунă чухне кирлĕ пулакан хатĕрсем çук.

— Ачасем, гимнастикă туни сывлăха упрат̆ Гимнастикă тăвакан çын тĕнчере гимнастикă тума йуратман çынран нумайрах пурăнма пултарат̆. Сирĕн те епĕ йертсе пынипе гимнастикă туса сывлăхăрсене тĕреклетмеле. Анчах сирĕн шкулта гимнастикă упражненисем тумали нимĕнле хатĕрсем те çук. Çавна аса илсе, епĕ сире вăл гимнастикă тенине ориентировăчнă, чăвашла каласан, сĕмленсе тума хушатăп. Калăпăр, çакăнта, гипотезă тăрăх, алпа тытса хăпарма (улăхма) тунă шалча пур, тейĕпĕр. Акă кунта унăн тăрри пултăр. Тăррине „А" тейĕпĕр. Ак кунта унăн никĕсĕ пултăр, ăна „В" тейĕпĕр. „В"-ран пуçласа „А" патне çитиччен хăпармала. Анчах ан манăр: шалчи сирĕн куçа курăнмат̆, мĕншĕн тесер, тĕрĕссипе каласан, вăл çук, шалча вырăнĕнче сывлăш çеç. Çапах та есĕр хăвăр пуçăрсемпе „вăл шалча пурах" тесе шухăшлăр, ун тăрăх хăпарса, „А" саспалипе пал тума пулнă тăрри патне çитĕр. Ну, пуçлатпăр...

— Учителĕ йулташ! Ку вара мĕн урокĕ пулат̆: гимнастикă урокĕ-и йе геометри урокĕ?

— Тĕпрен илсен, гимнастикă урокĕ. Гимнастикă тумали хатĕрсем çук пирки, вăл урок пирĕн... геометрипе çыхăнса кайат̆. Пĕтĕмĕшпе илсен, вăл— шкул директăрĕ шкул ачисен ӳт-пӳне тĕреклетессишĕн мĕнле тарăшнине кăтартакан факт пулат̆.


„Канаш" хаçат кăларакан чăвашсен сатирăпа кулăш литературă журналĕ

# КАПКĂН

**чăваш ĕççыннисене савăнăçлă кулăш паракан произведенисем пичетлесе пырат̆**

**КАПКĂН** халăх тăшманĕсене, шовиниссене, бӳрократсемпе волокитчиксене, кахалсемпе прогуљщиксене, рвачсемпе летунсене, туман çĕртенех „турăм" тесе суйакансене, совет саккунне пăсакансене, ĕçкĕ ăшне путнă етемсене, ĕççыннисене кайала туртакан тĕшмĕш хуçисене, вĕсем камне, ăçта пурăннине, мĕнле сăнлине тĕллесех кăтартса, бољшевикла самокритикăн хĕрӳ оргăнĕ пулса тăрат̆.

**КАПКĂН** чăваш ĕççыннисене тĕнчери чи паллă сатириксемпе йумориссен произведенисемпе паллаштарат̆.

**КАПКĂН** йалсемпе колхозсенчи тата предприйатисенчи драмкружоксем валљи кулăшла пйессăсемпе сценкăсем пичетлет.

**КАПКĂН** ача-пăчасем валљи йатарласа çырнă страницăсем кăларат̆.

**КАПКĂН** журналра чăвашсен паллă художникĕсем тунă кулăшла картинкăсем темиçе тĕслĕ сăрпа пичетленсе пыраççĕ.

ЖУРНАЛ ХАКĔ: 3 уйăха—1 тенкĕ те 20 пус;
6 уйăха—2 тенкĕ те 40 пус;
çулталăка—4 тенкĕ те 80 пус.

**Кашни почтă уйрăмĕсемпе агентствăсенче çырăнса илме пулат̆.**

Чăваш республикĕ тулашĕнчисем „Капкăн" çырăннă укçана çак адрĕспа куçараççĕ:
Чебоксары. Дом Связи. Союзпечать.

**Журнал номĕрĕсем пĕр татăксăр пырса тăччĕр тесе вăрăм вăхăта (çулталăка) çырăнса илме тăрăшăр!**



Секретарь и вып. редактор *И. ИЛЛАРИОНОВ.* За ответ. редактора *Ф. АЛЕКСАНДРОВ.*

Сдано в производство 2/III—37 г. Подписано к печати 25/III—37 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 156. Заказ № 527.

Формат бумаги 58×88 1/8 Об'ем 2,5 п. л. Гор. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 6000. Изд.-газ. «Канаш»

## Фашисӑм представителӗсенчен пӗри



—... Ӳстертӗм сӑртӑма, ун тӑрринчен мӗн пӑхӑнаҫ мана— ҫавна курап еп. Мӗн пӑхӑнмасҫ мана? Еп демӑн йевӗр пуҫ пулӑп тӗнчепе ку сӑрт ҫинчен...

(Пушкинӑн "Хыткукар рыцар" трагедири барон монолӑгӗнчен)